25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942
АПРЕЛЬ
12
ВЫРСАРНИКУН
86(6021) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖ ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ.



Ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе пысӑк тухӑҫлӑхпа тата лайӑх пахалӑхпа ӗҫленӗшӗн, ВКП(б) райкомӗсемпе ӗҫҫынни депутачӗсен районсенчи Совечӗсен исполкомӗсем тӑратнӑ тӑрӑх, ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми ҫине ҫаксене кӗртнӗ:

69. Ҫӗрпӳ районӗнчи Ҫӗнӗ Сала ялсоветне кӗрекен «Красный бригадир» колхоз (колхоз председателӗ **Н. В. Ферапонтов** юлташ). Колхоз ҫуракине районра пуриничен малтан хатӗрленсе ҫитнӗ. Ҫуракинче акма кирлӗ вӑрлӑха пӗтӗмпех сортласа хатӗрлесе хунӑ. Ялхуҫалӑх машинисемпе инвентаре йӑлтах юсанӑ. 740 лав тислӗк, 4,5 центнер лайӑх-кӗшӗк тислӗкӗ, 8 центнер кӗл пухнӑ. Колхозри лашасем лайӑх, мӑнтӑр.

70. Ҫӗрпӳ районӗнчи Янсакасси ялсоветне кӗрекен «КИМ» колхоз (колхоз председателӗ **П. Я. Яковлев** юлташ). Ҫуракинче акма кирлӗ вӑрлӑхсем пур тӗрлӗ культурӑсем енӗпе те ҫителӗклӗ, вӗсене пурне те акма юрӑхлӑ кондицие ҫитернӗ. Ялхуҫалӑх машинисемпе транспорт инвентарьне юсанӑ. Хире 300 лав тислӗк кӑларнӑ. Колхозри лашасем лайӑх, мӑнтӑр.

71. Ҫӗрпӳ районӗнчи Шӑнер ялсоветне кӗрекен «Балтиец» колхоз (колхоз председателӗ **Е. А. Афанасьев** юлташ). Ҫуракинче акма кирлӗ вӑрлӑх колхозӑн йӑлтах пур. Пӗтӗм вӑрлӑха сортласа хунӑ, акма тивӗҫлӗ кондицие ҫитернӗ. Мӗнпур ялхуҫалӑх машинисене, транспорт инвентарьне, лаша кӳлмелли хатӗрсене юсанӑ. Хире 300 лав тислӗк кӑларнӑ. Колхоз лашисем пурте лайӑх, мӑнтӑр.

72. Ҫӗрпӳ районӗнчи Иваново ялсоветне кӗрекен «Луч» колхоз (колхоз председателӗ **П. М. Кузнецов** юлташ). Колхоз ҫуракинче акма кирлӗ вӑрлӑха ҫителӗклӗ хатӗрленӗ, пӗтӗмпех сортласа хунӑ, акма юрӑхлӑ кондицие ҫитернӗ. Ялхуҫалӑх машинисене, инвентаре тата лаша кӳлмелли хатӗрсене юсанӑ, вӗсем пурте ҫуракине хатӗр. Хире 210 лав тислӗк кӑларнӑ тата вырӑнти ытти удобренисене те хатӗрленӗ.

Фронтшӑн, ҫӗнтерӳшӗн ырми-канми ӗҫлер!

Паян эпир пирӗн республикӑри ӗҫҫыннисем фронта пулӑшас тӗлӗшпе мӗнле ӗҫлени, мӗнле кӗрешни ҫинчен калакан материалсене пичетлесе кӑларатпӑр. Чӑваш халӑхӗ фронтшӑн мӗнле тӑрӑшнине, ӑна мӗнле пулӑшса пынине чӑваш ӗҫҫыннисен ячӗпе генерал-майор Кирюхин чаҫӗнчи боецсемпе командирсем патне Верховный Совет Президиумӗн председателӗ Андреева, Совнарком председателӗ Сомов тата ВКП(б) Обкомӗн секретарӗ Чарыков юлташсем ালӑ пусса янӑ ҫырура уҫҫӑн кӑтартса панӑ.

Социализмлӑ тӑван ҫӗршыв ҫине ултавлӑн килсе тапӑннӑ тискер тӑшмана хирӗҫ совет халӑхӗ вуннӑмӗш уйӑх ӗнтӗ отечественнӑй вӑрҫӑ туса пырать. Нимӗҫ фашисчӗсем пирӗн халӑхӑн ирӗклӗхне «ҫиҫӗмле хӑвӑрт» пӗтерсе тӑкма шутланӑ. Анчах вӗсем йӑнӑшрӗҫ. ССР Союзӗ тӑшмана хирӗҫ отечественнӑй вӑрҫӑ туса пыма пӗр ҫын пек ҫӗкленчӗ, никам ҫӗнтерейми пӗрлӗхлӗ ҫар лагерӗ пулса тӑчӗ. Малтанхи ҫапӑҫусенче тӑшман вӑйне хавшатса пырса, Хӗрлӗ Ҫар контрнаступлени тума тытӑнчӗ, вӑл Гитлерӑн вӑрӑ-хурахла ҫарне вӑйлӑн пыра-пыра ҫапрӗ, тӑшман вӑхӑтлӑха тытса илнӗ чылай территорисемпе унта пурӑнакан совет халӑхне ҫӗнӗрен ирӗке кӑларчӗ. Нимӗҫсен урса кайнӑ йыткӑ-тӗвӗсем, пысӑк ҫухатусем туса тата хӑйсен [illegible] тӑрахса хӑварса, Хӗвеланӑҫнелле чакса пыраҫҫӗ.

Фашистла ирсӗрсене пӗтерсе тӑкассишӗн пыракан кӗрешӳре Совет Союзӗнчи нумай нацилле халӑхсем пӗр ҫын пек, пӗр ҫемьери тӑвансем пек туслӑн тӑрса ҫапӑҫаҫҫӗ. Вӗсен пурин те пӗр тӗллев — хамӑрӑн ирӗклӗ аслӑ ҫӗршыва, хамӑрӑн чыслӑха хӳтӗлесе хӑварасси, иртӗхсе кайнӑ тӑшмана пӗтерсе тӑкасси. Ҫак таса тӗллев, ҫак хисеплӗ задача пирӗн пӗтӗм халӑха, пирӗн Хӗрлӗ Ҫара пурнӑҫа шеллемесӗр ҫапӑҫма, пысӑк ҫӗнтерӳсем тума хавхалантарать. Тӑшмана хирӗҫ нихӑҫан пулман паттӑрлӑх кӑтартса кӗрешме пире аслӑ Ленинӑн ҫӗнтерӳллӗ ялавӗ хавхалантарса пырать. Ҫак кӗрешӳре пире кутузнехи генилле полководец Сталин юлташ ертсе, ҫул кӑтартса пырать.

Пӗтӗм совет халӑхӗ туса пыракан отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑра чӑваш ӗҫҫыннисем те активлӑн хутшӑнса кӗрешеҫҫӗ. Чӑваш халӑхӗн ҫӗршер те пиншер ывӑлӗсем хаяр ҫапӑҫусен малти позицийӗсенче паттӑрлӑхпа хӑюлӑх кӑтартаҫҫӗ. Вӗсенчен нумайӗшӗ ӗнтӗ правительствӑн пысӑк наградисене илме, хӑшпӗрисем тата Совет Союз Геройӗн чыслӑ ятне илме те тивӗҫлӗ пулчӗҫ.

Пирӗн тылри ӗҫҫыннисем те фронтшӑн кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлеҫҫӗ, хӑйсен вӑйне тата пурнӑҫне шеллемесӗр фронтшӑн тӑрӑшаҫҫӗ. Тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкма Хӗрлӗ Ҫара пулӑшассинчен чыслӑрах ӗҫ, вӑрҫӑра мӗн кирлине йӑлтах фронта парса тӑрассинчен чыслӑрах ӗҫ халӗ пулма пултараймасть. Ҫакна пирӗн халӑх лайӑх ӑнланать, ӑна тӑтӑшах пурнӑҫа кӗртсе пырать.

Чӑваш республикинчи рабочисемпе колхозниксем фронта пулӑшас енӗпе чылай пысӑк ӗҫсем туса ирттерчӗҫ. Хӗрлӗ Ҫар валли ҫӗнӗ те пултаруллӑ резервсем хатӗрлесси ӑнӑҫлӑн пулса пырать. Ҫӗршер те пиншер ҫамрӑксем тата аллӑ хӗҫпӑшал тытма пултаракан ӗҫҫыннисем вӗренӳ пункчӗсенче ҫар ӗҫне тимлӗн вӗренеҫҫӗ. Вӗсем хальхи вӑрҫӑ тактикине, ҫӗнӗ хӗҫпӑшалсемпе паллашаҫҫӗ. Тӑван ҫӗршыв чӗнсенех ӑна хӑйсен кӑкӑрӗпе хӳтӗлеме хатӗр тӑракан патриотсен хисепӗ ҫаштер пысӑк.

Республикӑри предприятисем пӗр чарӑнмасӑр ӗҫлесе фронт заказӗсене пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ. Хӑйсен планне, уйӑрӑмӑнах васкавлӑ заказсене, срокчен тата ирттерсе тултаракан предприятисемпе артельсем пирӗн ҫӗршерӗн шутланаҫҫӗ. Вӗсенчи стахановецсен, кунне ҫӗрне пӗлмесӗр ӗҫлекен патриотсен йышӗ те ӳссех пырать.

Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисем тӑван ҫӗршывӑн оборона фондне кунсерен ӳстерсе пырассишӗн кӗрешеҫҫӗ. Республикӑри колхозсемпе колхозниксем оборона фондне 28.300 пӑт тӗштырӑ, 3.850 пӑт аш-какай тата ытти апат-ҫимӗҫсем нумай хывнӑ, укҫа тата заем облигацийӗсем 15 миллион тенкӗлӗх панӑ. Халӗ Хӗрлӗ Ҫар валли ӗмӗлӑхсем самӑртса хатӗрлес ӗҫ анлӑн пулса пырать. Республикӑра уйрӑмӑнах боецсем валли ӑшӑ тумтирсем пухас ӗҫ ӑнӑҫлӑн пулса иртрӗ. Пиншер кӗрӗк пиншаксем, пиншер мӑшӑр ҫӑматӑсем ярса панӑ Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем патне. Кунсӑр пуҫне бронепоезд тума, танксен соединенине тума укҫа-тенкӗ нумай пухнӑ, халӗ «Пионер Чувашии» танка тума укҫа пухас ӗҫ хӗрӳллӗн пырать.

Ку ҫеҫ мар-ха. Пирӗн халӑхпа Хӗрлӗ Ҫар хушшинчи ҫирӗп ҫыхӑнӑва кӑтартса паракан тепӗр лайӑх тӗслӗх вӑл — Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем патне ӗҫҫыннисем тӑтӑшах парнесем ярса тӑни пулать. Республикӑри ӗҫҫыннисем ҫӗнӗ ҫул ячӗпе, Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ ятпа боецсем патне вуншар тонна кучченеҫсем ярса панӑ. Майӑн 1-мӗш ячӗпе кучченеҫсем пухса ярас ӗҫ уйрӑмӑнах ӑнӑҫлӑн пулса пырать. Республикӑн районӗсемпе хулисенче пиншер килограмм аш-какай, ҫу, конфетсем, премӗксем, табак тата ытти япаласем те пухса хатӗрленӗ. Ҫав кучченеҫсене боецсем патне Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисен делегацийӗ ҫак кунсенчех илсе каймалла.

Фронта пулӑшас, Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем патне парнесем ярса тӑрас ӗҫе Улатӑр, Калинински, Октябрьски, Чкаловски районсем тата Шупашкар хули кӑтартуллӑн туса пыраҫҫӗ. Ҫак районсенчи ӗҫҫыннисем пирӗн паттӑр воинсемшӗн тӑван аммӑшӗ пек тӑрӑшаҫҫӗ.

Ӗҫҫыннисен патриотла туйӑмӗ халӗ нихӑҫанхи пек мар вӑйлӑ. Арҫынӗ те, хӗрарӑмӗ те, ватти те, ҫамрӑкки те ҫак историллӗ кунсенче тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкас кӑмӑлпа пурӑнать. Ҫак енчен илсен, Настя Яковлевӑн примерӗ уйрӑмӑнах характерлӗ. Унӑн упӑшки П. Яковлев тӑшмана хирӗҫ ҫапӑҫса геройла вилӗмпе вилнӗ. Тӑшмана хаярлӑн тавӑрас кӑмӑл Настя чӗрине кӗрсе вырнаҫать. Вӑл хӑйне фронта яма ыйтать. Мӗн чухлӗ пирӗн ҫавӑн пек вӗри чӗрелле патриотсемпе патриоткӑсем! Ҫавӑн пек патриотсен ҫӗршывне тӑшман нихӑҫан та ҫӗнтереймӗ!

Анчах пирӗн лӑпланса ларма юрамасть. «Тӑшман поражени тӳсет, анчах ӑна ҫӗмӗрсе тӑкман-ха, уншӑн та ытларах, ӑна пӗтерсе тӑкман-ха. Тӑшман вӑйлӑ-ха. Ӑнӑҫусем тӑвас тесе, вӑл хӑйӗн пӗтӗм вӑйне пухма тӑрӑшӗ» (Сталин). Тӑшман мӗн чухлӗ ытларах поражени тӳсет, вӑл ҫавӑн чухлӗ тискерленсе пырать. Ҫавӑнпа та пирӗн халӑхӑн пӗтӗм вӑя фронта пулӑшас ӗҫе хурас пулать, вӑл пулӑшӑва малалле татах та вӑйлатса пырас пулать. Май уявӗ умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнса, предприятисен ӗҫне вӑйлатса пырас пулать. Колхозсенче ҫуракине хатӗрленсе ҫитсе ӑна ӑнӑҫлӑн ирттерме мӗн кирлине пурне те тӑвас пулать. Ҫакӑ вара фронта пулӑшас тӗлӗшпе эпир тунӑ чи паха ӗҫсенчен пӗри пулса тӑрӗ.

Пирӗн паттӑр воинсене Чӑваш ӗҫҫыннисенчен хӗрӳллӗ салам!

Генерал-майор Кирюхин чаҫӗнчи боецсене, командирсене, комиссарсене тата политработниксене

ХАКЛӐ ЮЛТАШСЕМ!

Чӑваш республикинчи рабочисен, колхозниксен тата интеллигенци ячӗпе сире, паттӑр воинсене, большевикла салам яратпӑр.

Пирӗн социализмлӑ тӑван ҫӗршыв ҫине ултавлӑн тапӑннӑ нимӗҫ империалисчӗсене-захватчикӗсене хирӗҫ эсир геройла кӗрешнине пирӗн республикӑри ӗҫҫыннисем тимлӗн сӑнаса пыраҫҫӗ. Ылханлӑ тӑшмана — юнлӑ фашизма — хирӗҫ кӗрешсе, эсир тунӑ ҫӗнтерӳсем Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисене пӗтӗм совет халӑхне савӑнтарнӑ пекех савӑнтараҫҫӗ, вӗсене фронтшӑн, нимӗҫ пусмӑрҫисене ҫӗмӗрсе тӑкас ӗҫшӗн хӑйсен пурнӑҫне шеллемесӗр ӗҫлеме хавхалантараҫҫӗ. Тӑшмана хирӗҫ пыракан кӗрешӳре паттӑрлӑхпа чӑн-чӑн героизм кӑтартнӑ боецсем, командирсем тата политработниксем хушшинче чӑваш халӑхӗн чи лайӑх ывӑлӗсем те пуррине пӗлме питех те савӑнӑҫлӑ, ҫав паттӑррӑн кӗрешекен юлташсене Совет Правительстви пысӑк хисепе хурса хакларӗ.

Фронта пур енӗпе те пулӑшса пырассине организацилес тӗлӗшпе Чӑваш республикинчи рабочисем, колхозниксемпе совет интеллигенцийӗ ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлеҫҫӗ. Республикӑри сахал мар предприятисем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи ӗҫ планне ирттерсе тултарчӗҫ. Ҫӗршер промартельсем, ҫар заказӗсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртсе, Хӗрлӗ Ҫар валли кирлӗ япаласем туса паҫӗҫ. Республикӑри предприятисемпе транспортра вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи стахановецсен—двухсотниксемпе трехсотниксен хисепӗ кашни кунах ӳссе пырать. Фронта кайнӑ юлташсен вырӑнӗнче ӗҫлеме хӗрарӑмсем тӑчӗҫ. Ҫар валли пултаруллӑ резервсем вӗрентсе хатӗрлес ӗҫ республикӑри вӗренӳ пункчӗсенче хӗрӳллӗн пулса пырать.

Чӑваш республикинчи колхозлӑ хресченсем фронта кулленех пулӑшса тӑраҫҫӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи хӑшпӗр йывӑрлӑхсене пӑхмасӑр, пирӗн республикӑри ҫӗршер колхозсем ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн вӗҫлерӗҫ, государствӑна ялхуҫалӑх продукчӗсем памалли обязательствӑсене срокчен пурнӑҫа кӗртрӗҫ. Республикӑри колхозсемпе колхозниксем оборона фондне 28.300 пӑт тӗштырӑ, 3.850 пӑт аш-какай тата ытти ялхуҫалӑх продукчӗсем нумай пачӗҫ. Пирӗн республикӑри ӗҫҫыннисем тӑван ҫӗршыва хӳтӗлекен мухтавлӑ боецсем патне ӑшӑ тумтирсем, продуктсем хурса ҫӗнӗ ҫул ячӗпе тата Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ ятпа ҫӗршер пин посылкӑсем ярса пачӗҫ. Паттӑр Хӗрлӗ Ҫарӑн боецӗсем валли Майӑн пӗрремӗш ячӗпе парнесем пухса ярас ӗҫ республикӑра пысӑк ҫӗкленӳпе пулса иртрӗ. Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисем республикӑри госпитальсенче сывалакан аманнӑ боецсемшӗн тӑванла тӑрӑшаҫҫӗ.

Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли ӑшӑ тумтирсемпе урана тӑхӑнмаллисем пухас ӗҫе эпир начар мар туса ирттертӗмӗр. Государствӑн ҫак пысӑк ӗҫне республикӑри пур ӗҫҫыннисем те активлӑн хутшӑнчӗҫ. Эпир оборона фондне укҫа тата государство заемӗсен облигацийӗсене 1 миллион тенкӗлӗх ытла хыврӑмӑр. Укҫа-тенкӗ пухас ӗҫ малалла та пулса пырать.

Республикӑри комсомол организацийӗ бронепоезд тӑвас ыйтӑва ҫӗклерӗ. Ҫак пуҫарӑва пӗтӗм республика хӑвӑрт йышӑнса илчӗ. Бронепоезда туса хатӗрлерӗмӗр ӗнтӗ. Нумаях та пулмасть республикӑри ӗҫҫыннисен представителӗсем фронтӑн малти позицийӗсене каякан „Комсомол Чувашии“ бронепоездӑн экипажӗпе тӗл пулчӗҫ.

Фронта ачасем те пулӑшаҫҫӗ. Етӗрне хулинчи пионерсем „Пионер Чувашии“ танк тума чӗнсе каларӗҫ, ҫакӑн хыҫҫӑн вӑл танка тума укҫа пухас ӗҫ сарӑлса кайрӗ. Халӗ ӗнтӗ 200.000 тенкӗ ытла укҫа пухӑннӑ.

Хаклӑ боецсем, командирсемпе политработниксем! Эпир лайӑх пӗлсе тӑратпӑр, тӑшмана халӗ ҫӗмӗрсе тӑкман-ха, фашистла Германин тутӑхса кайнӑ ҫар машинине аркатса тӑкас тесен, нумай вӑй хурса ӗҫлемелле пулать. Эпир фронта пулӑшассине кунсеренех вӑйлатса пырӑпӑр тесе, сире шантарса калатпӑр.

Фашистла ирсӗр фрицсене ҫӗмӗрсе пырӑр! Вӗсене сывлӑш ҫавӑрса илме те ан парӑр! Фашистла сволочьсене советӑн таса ҫӗрӗ ҫинчен хӑваласа кӑларӑр! Хӑвӑрӑн арӑмӑрсемшӗн, ачӑрсемпе тӑванӑрсемшӗн ан пӑшӑрханӑр. Совет Правительстви тата ӗҫҫыннисем вӗсемшӗн кулленех тӑванла тӑрӑшаҫҫӗ.

Сывӑ пултӑр пирӗн социализмлӑ тӑван ҫӗршыв, унӑн ирӗклӗхӗ, унӑн никама пӑхӑнманлӑхӗ!

Сывӑ пулччӑр Совет ҫӗршывӗн мухтавлӑ воинӗсем!

Сывӑ пултӑр пирӗн ҫулпуҫ тата учитель Сталин юлташ!

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ *З. АНДРЕЕВА*.

Чӑваш АССР Совнаркомӗн председателӗ *А. СОМОВ*.

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн секретарӗ *И. ЧАРЫКОВ*.

Май умӗнхи ӑмӑрту

СТАЛИНЛА ВАХТӐРА ТӐРАҪҪӖ

КАНАШ. Ӗҫҫыннисен аслӑ уявне — Майӑн 1-мӗшне тивӗҫлипе кӗтсе илме хатӗрленсе, вагонсем юсакан заводри тимӗр шӑратакан цех коллективӗ производствӑра кунран кун ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тӑвать. Цехри малта пыракан рабочисем, Май уявӗ умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнса, сменӑри нормӑсене апрель уйӑхӗнче кашни кунах 300-шер процент тултарма обязательство илнӗ. Ҫак обязательствӑна пурнӑҫлас тесе вӗсем халь сталинла вахтӑна тӑнӑ. Злотников, Подвиженко, Василенко тата Котляренко формовщиксем, сталинла вахтӑра тӑрса, сменӑри нормӑсене виҫӗ хут ирттерсе тултараҫҫӗ. Ҫакӑн пек тухӑҫлӑхпах Матузенко, Вдовенко, Конайко т. ыт. рабочисем те ӗҫлеҫҫӗ.

Май уявӗ умӗнхи ӑмӑртура вагонсем юсакан цехри ҫамрӑксен фронтовой бригадисем уйрӑмӑнах пысӑк ӗҫ тухӑҫлӑхӗсем кӑтартаҫҫӗ. Чернухин, Чесов тата Фадеичев юлташсен бригадисем кашни кунах икшер норма тултараҫҫӗ, Николаев юлташӑн бригади 2,5 нормӑна ҫитерет.

Заводри комсомолецсенчен чылайӑшӗсем фронтовой станоксемпе ӗҫлеҫҫӗ. Ҫак станоксемпе ӗҫлекенсен двухсотник пулмалла тата продукцие питӗ лайӑх туса кӑлармалла. Рылина, Волкова, Ляшина, Доронина комсомолкӑсем халӗ ҫавӑн пек ӗҫлеҫҫӗ те ӗнтӗ.

Комсомолӑн тимӗр шӑратакан цехри организацийӗ рабочисем хушшинчи массӑллӑ агитаци ӗҫне лайӑх йӗркеленӗ. Комсомолец-агитаторсем кашни кунах калаҫусем ирттереҫҫӗ, хаҫатсенчи ҫӗнӗ хыпарсене вуласа параҫҫӗ. Цехра тӑтӑшах «Литейщик» ятлӑ стена хаҫачӗ тухса тӑрать. **М. АНДРЕЕВ.**

ЭРЕХ ЗАВОДӖНЧЕ ӖҪЛЕКЕНСЕН ОБЯЗАТЕЛЬСТВИ

Шупашкарти эрех заводӗнче ӗҫлекенсем, Май уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, апрель уйӑхӗнчи производствӑллӑ плана 130 процент тултарма обязательство илчӗҫ. Халӗ бригадӑсем ҫак обязательствӑна ӑнӑҫлӑн тултарассишӗн кӗрешеҫҫӗ. Уйрӑмӑнах стахановка Беляшова юлташӑн бригади лайӑх тӗслӗхсем кӑтартать. Ҫав бригада март уйӑхӗнчи ӗҫ планне 102 процент тултарчӗ. Ку уйӑхра вӑл татах та лайӑхрах ӗҫлет: иртнӗ вунӗ кунлӑхри задание 114 проц. тултарчӗ.

Нумаях пулмасть ку бригада ликерсем тӑвакан цехра ӗҫлекенсене социализмлӑ ӑмӑртӑва чӗнчӗ. Вӗсем чӗнӗве йышӑнса, продукци туса кӑларассине ӳстерме, вӗсен пахалӑхне лайӑхлатма, ӗҫ вырӑнӗсене таса тытма пулчӗҫ.

Май уявӗ умӗнхи ӑмӑрту ытти цехсенче те сарӑлса пырать.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Апрелӗн 10-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Апрелӗн 10-мӗшӗнче фронтра нимӗнле палла улшӑнусемех те пулман.

Тӗрӗсрех паларткӑ тӑрӑх, апрелӗн 8-мӗшӗнче противникӑнне малтан пӗлтернӗ пек 25 самолет мар, 30 самолет пӗтерсе тӑкнӑ.

Апрелӗн 9-мӗшӗнче сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 9 самолетне персе ӳкернӗ. Пирӗн 5 самолет пӗтнӗ.

* * *

Апрелӗн 9-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем нимӗҫсен 4 танкне, пехотӑпа грузсем турттарса пыракан 40 автомашинине, 25 полевой тата зенитнӑй орудине, 12 минометне, зенитнӑй пулеметсен 18 точкине пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, артиллерин 5 батарейине пусарса лартнӑ, противникӑн пехотине 6 ротӑна ҫити салаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Брянск фронтӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн чаҫсем халӑх пурӑнакан икӗ пункта йышӑнса илнӗ. Нимӗҫсем ҫав ялсен урамӗсенче ҫӗр ытла вилӗ, 3 оруди тата 17 ешӗк мина пӑрахса хӑварнӑ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пирӗн боецсем пӗр кун хушшинче нимӗҫсен 30 блиндажне, пӗр орудине тата 8 пулеметне тытса илнӗ. Чӗрӗ вӑй тӗлӗшпе нимӗҫсем пысӑк ҫухатусем тӳснӗ. Фронтӑн тепӗр участокӗнче, пирӗн чаҫсем пӗр кун каярах йышӑнса илнӗ пункта каялла тавӑрма тӑрӑшса, гитлеровецсем, танксем пулӑшнипе, пирӗн позицисене хирӗҫ контратака тума виҫӗ хутчен хӑтланса пӑхнӑ. Пирӗн боецсем, артиллерипе пулеметсенчен персе, противника каялла тартнӑ, противник ҫапӑҫу хирӗнче темиҫе ҫӗр вилӗ пӑрахса хӑварнӑ.

* * *

Кӗҫӗн лейтенант Черепанов командир пулса тӑракан рота гитлеровецсене 30 дзотран хӗссе кӑларнӑ, нимӗҫсен 67 салтакне тата 3 офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫав ротӑн боецӗсем пӗр оруди, темиҫе вуншар винтовка, 10.000 патрон тата радиостанци тытса илнӗ.

* * *

Брянск таврашӗнчи вӑрмансенче кӗрешекен партизансен отрячӗсем гитлерла захватчиксене хӑюллӑн ҫапа-ҫапа аркатса пыраҫҫӗ. Партизанла отрядсен боецӗсем темиҫе уйӑх хушшинче гитлеровецсен 4.273 салтакне тата 257 офицерне вӗлерсе пӗтернӗ. Нимӗҫсен 163 салтакне тата 23 офицерне тыткӑна илнӗ. Гранатӑсем тата горючи тултарнӑ бутылкӑсем ывӑтса, партизансем аэродромсем ҫинче нимӗҫсен 19 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ, противникӑн 38 танкне ҫунтарса янӑ, 19 бронемашинине персе ҫӗмӗрнӗ, пӗр бронепоездне, 365 автомашинине, боеприпассемпе тӗллӗ хатӗрсен 8 складне, горючи тултарнӑ 13 цистернине, 88 кӗпере взрыв туса сирпӗнтернӗ, войскӑсем ларса пыракан 19 поезда ӳпӗнтерсе янӑ. Ҫакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: 16 автомашина, 706 винтовка, 57 пулемет, 43 автомат, 9 оруди, 8 миномет тата 5 радиостанци.

* * *

Аялараххра Кӑнтӑр фронтӗнче вӗлерӗнӗ нимӗҫ ефрейторӗ фон Штерн ҫумӗнче тупнӑ дневникран уйрӑм вырӑнсене илсе пичетлетпӗр:

«**Январӗн 5-мӗш.** Краков. Пулемета вӗренетпӗр. Маршевӑй группа ҫине Лемберг хыҫӗнче партизансем тапӑннӑ.

Январӗн 10-мӗш. Тарнопольрен тухса кайрӑмӑр. Ҫул тӑрӑх нимӗҫсен вилтӑприсем питӗ нумай тӗл пулаҫҫӗ.

Январӗн 12-мӗш. Умане ҫитрӗмӗр. Хулара ҫын таврашӗ ҫук. Виҫӗ кун ӗнтӗ апат ҫимесӗр пурӑнатпӑр. Пурне те ылханатпӑр.

Январӗн 13-мӗш. Эпир Кировоградра. Урамсенче пӗр ҫын та курӑнмасть. Пушӑ завод ҫуртне вырнаҫрӑмӑр.

Январӗн 29-мӗш. Днепропетровск. Пӗтӗм колонна каллех пӑтрашса кайрӗ... Нумайӗшӗ чирлесе ӳкрӗҫ. Хулара пирӗн 60-мӗш пехотнӑй дивизин вилнӗ салтакӗсен масарӗ. Вилтӑприсем вӗҫӗ-хӗррисӗрех нумай. Ҫак кунсенче кунта ҫапӑҫу хирӗнчен тарнӑшӑн пӗр ушкӑн салтака суд тунӑ.

Февралӗн 9-мӗш. Акӑ ӗнтӗ дивизие ҫитрӗмӗр. Юлашки ҫапӑҫусенче пулнӑ салтаксем пире хамӑрӑн дивизи калама ҫук пысӑк ҫухатусем тӳсни ҫинчен каласа пачӗҫ.

Февралӗн 17-мӗш. Кӑнтӑрла курӑнма юрамасть. Высота ҫинче вырӑссен снайперӗсем выртаҫҫӗ. Кӑнтӑрла пирӗн пата полковник (Древе ыйтӗ, сухалне ӳстерсе янӑ, ватӑлса кайнӑ. Вӑл ҫапла калать: «Пире йӗрке-тавра ҫавӑрса илнӗ. Ку пункта кирек мӗн пулсан та хамӑр алӑра тытса тӑмалла», тет.

Мартӑн 24-мӗш. 2 сехет те 30 минутӑра тревога. Вырӑссен артиллерийӗ пире сиплет... Ҫӗр чӑмӑрӗ ак халь чарӑнса ларассӑн туйӑнать — ҫавӑн пек хӑрушӑ туйӑнать... Батальонӑн ҫухатӑвӗсем пысӑк. Тӗрӗссипе илсен, полк ҫук та ӗнтӗ. Пӗлӗшсенчен нумайӗшӗ, нумайӗшӗ пӗтрӗҫ».

* * *

Выҫлӑха пула, чӗртавар пӗр тӑтӑш илсе пырса тӑрайманнине пула тата Германири предприятисенче квалификациллӗ рабочисем ҫитменнине пула продукци туса кӑларасси чакнӑҫемӗн чакса пырать. Нюренберг ҫывӑхӗнчи металлурги заводӗнче ӗҫ тухӑҫлӑхӗ март уйӑхӗнче, февральтипе танлаштарсан, 16 процент чакнӑ. Ӑнсӑртран аманасси-вилесси питӗ хӑвӑрт ӳссе кайнӑ. Ҫав вӑхӑт хушшинчех 50 ытла рабочи йывӑр аманнӑ. Час-часах саботаж пулнӑ пирки цехсенче штурмовиксен посчӗсем туса хунӑ.

* * *

Нимӗҫсем Франци халӑхӗн аллинче тӑракан хӗҫпӑшала пама темиҫе хут та срок кӑтартса панӑ ӗнте. Франци патриочӗсем ҫав приказсене пурнӑҫламаҫҫӗ кӑна мар, вӗсем оккупантсене хирӗҫ кӗрешессине вӑйлатсах пыраҫҫӗ. Эпинлире (Сена департаменчӗ) нумаях пулмасть ҫар материалӗсем турттарса пыракан поезда ӳпӗнтерсе янӑ. Брестра нимӗҫ салтакӗсем пурӑннӑ ҫурта взрыв туса сирпӗнтернӗ. Нантра урамра ҫар грузӗ турттарса пыракан грузовика ҫунтарса янӑ, пӗр нимӗҫ офицерне вӗлернӗ. Льевенри тӗп мастерскойра ӗҫлекен рабочисем забастовка тунӑ та нимӗҫсем тытса хупнӑ 80 рабочие ирӗке кӑлартарнӑ. Нумай департаментсенче хресченсем продовольстви турттса илнине хирӗҫ активлӑн кӗрешеҫҫӗ. Гитлеровецсем полици тата сутӑнчӑксем пулӑшнипе нумай ҫынна арестлеҫҫӗ. Анчах та ҫапла туни пачах урӑхла результат парать. Нимӗҫ пусмӑрҫисене хирӗҫ кӗрешме Франци патриочӗсен ҫӗнӗ те ҫӗнӗ отрячӗсем ҫӗкленеҫҫӗ.

Апрелӗн 11-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Апрелӗн 11-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле фронтра нимӗнле палла улшӑнусемех те пулман.

* * *

Ленинград фронтӗнчи уйрӑм участоксенче кӗрешекен пирӗн чаҫсем икӗ кун хушши ҫапӑҫса нимӗҫсен 6 дзочӗпе 7 блиндажне аркатнӑ, пӗр танк, 9 оруди, минометсен 4 батарейине тата 3 станковӑй пулемет пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсем 1.600 ҫын вилсе пӗтнӗ. Противникран 4 оруди, 35 пулемет, 9 миномет, 23 автомат, боеприпассем нумай тытса илнӗ.

* * *

Брянск фронтӗнчи участоксенчен пӗринче юлашки кунсенче противникӑн, вилнисене кӑна шутласан, 3.000 салтакпа офицер пӗтнӗ. Пирӗн чаҫсем трофейӑсем тытса илнӗ, вӑл шутра 3 танк тата 26 пулемет. Халӑх пурӑнакан темиҫе пункта нимӗҫ оккупанчӗсенчен хӑтарса ирӗке кӑларнӑ.

* * *

Калинин фронтӗнчи участоксенчен пӗринче ҫапӑҫакан пирӗн чаҫсем пӗр кун хушшинче нимӗҫсен 4 орудине, 5 станковӑй пулеметне, минометсен батарейине, 6 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ, 8 дзота ҫӗмӗрнӗ тата боеприпассен икӗ складне сирпӗнтерсе янӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсем 200 ҫын ытла вилсе юлнӑ. Пирӗн боецсем пӑшалсемпе пулеметсенчен персе нимӗҫсен 2 самолетне ӳкернӗ, вӗсенчен пӗр самолетне красноармеец Крылов юлташ персе ӳкернӗ.

* * *

Старши лейтенант Алферёнок юлташӑн батарейинчи зенитчиксем пӗр кун хушшинче противникӑн пикировка тӑвакан бомбардировщикӗсен 5 атакине сирсе янӑ тата «Ю—87» йышши икӗ самолета персе ӳкернӗ.

* * *

Сержантсен Каторгинпа Зотов юлташсен оруди расчечӗсем тӳррӗн персе нимӗҫсен 5 танкне ҫӗмӗрнӗ.

Вӗҫӗ 4-мӗш страницӑра

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂН ФРОНЧĔСЕНЧЕ

Хаяррăн айăплани

Кăл. Кăмрăк. Тапталнă сад-пахчисем. Нумай пулмасть кăна çак вырăнта ук-рашкесен тăпăлтăрă те шалпырă çуртсем ларнă. Халĕ вĕсем çук. Çакăн пек мĕскĕнлĕх хурăнасçĕ Хĕрлĕ Çар ним-мĕс оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă Харьков облаçĕнчи, Барвенково район-ĕнчи чылай ялсем. Пирĕн войскăсен хĕссе пынине чăтайман нимĕçсем хăйсен çулĕ çинче мĕн тĕл пуласçĕ, çавна пурне те ишĕлтерсе, вутса, çун-тарса пырасçĕ. Вĕсем хăйсен юнлă хуçи Гитлер хушнă тискер майăпа хăйсене çĕç-шĕпе мĕн ĕлкĕрнĕ, вĕсене çав вăхăтра пĕтĕмпех тата пĕтерсе хăварасшăн. Фашистсем эпир хăйнă вырăнсене вут хăна ямасçă тĕрлĕ, чĕтрез юн хăна, вăйсăр юнĕ хăна пулăкăн тăрамасçĕ.

Нумаях пулмасть çак Барвенково районĕнчи совет ялĕсене хăйсене айăпласа-ха Кĕ-лĕн районне кĕнĕ çапла хурăна илнĕ. Çак кĕç пĕтĕм ялĕ пĕтĕм тухнă. Ирĕке кăларнă ялсенче пурăнакан халăх темиçе вуншар акт çырнă. Çав актсем гитлеровецсен хресчен çурчĕсене, колхоз пурлăхне вăрă-хурахла çаратни çинчен, нимĕç захватчикĕсем ашшĕне, амăшне, ачисене вĕлерни çинчен, çĕр çийĕнчи пĕтĕм халăх тарăлса ăсатнă. Вăл документсене тата пĕтĕм çĕр-шывĕпе вулама кăларнă. Хăшĕ-пĕри вырăнсене, улăх ăшĕнчи акт мар, çавăн пек вăрă-хурах политикине. Совет Союзĕнчи халăхсене пусмăрлас политика тĕкĕр çинчи ун лайăх курăнса тăрать.

Пирĕн умра «Красная Заря» поселок-ра çамăсем çырнă акт. Çак пысăках мар документра цифрăсем çÿç-пуça вирелле тăратасçĕ. Поселокра 38 çуртран виççĕ-шĕ кăна тăрса юлнă. Ыттисене фашист-сем хăйсем каялла чакнă чухне пĕтĕм-пех вутса çунтарса янă. Халăхсем пĕр-те сахăл поселокри çĕр пÿртсене пу-рăнаççĕ. Поселока çĕрле вут тĕртнĕ. Хресченсем пушартан нимĕç те çăлса кăларайман. Поселокри çынсен алли-сене «кишăр-чăхăрра çапла халаса ла-рас» пĕр тухса кайнă фашист, çĕре хресчен çуртсене пĕрин хыççăн, те-пĕрне вут тивертсе пырса, пĕлм-пĕлми вырăсла хăлхене — Германи сире хурăн шуçăм мĕскер икĕне кăтартăпăр, ха-лăх хăйĕн хăласа вĕçĕсене ярăнăр, — тесе кăшкăрнă. Çынсем хуравăн пур-çĕре хытă хĕрÿ тухнă. Пурне те пĕтĕм-пех çунтарса яр-çĕр, хĕвелĕн: вĕсем çине ав-томатсене тĕллесе тăнă.

Ахă тата тепĕр акт. «Реконструктор» колхозра нимĕçсем 38 çурт çунтарса янă. Халĕ кунта пĕр çурт çук... Çав çĕрте ял халăхĕ çук хыпарлама ялса. Ялта кнопа пулнă, çĕр пÿртсене пĕр тăхнă çăнăх... Халĕ ун çине пăх-ма та хăрамалла.

Змĕвка ялĕнче. Çак ялта Новодмитровски ялĕнче хăйсен халлă ялсене мĕнле ĕçлĕ кăтартса пынă, тата хăй хытă ларнă, ĕçлĕ ялсене çунтарни çинчен хыçран хăвăрт.

Çĕр пĕр урăх хăйсем лере Гитлер-ĕмĕр кĕнĕ тĕлĕк çапла... Çав ялсем пĕтĕм хресченсем пĕтĕм те çăлса кăлармарĕ. Нимĕçсем ăна ăçтан... Хĕрлĕ Çар фашистсене хыççăн çапса хăвалать. Вăл тăшман çинчен çав ялсенче ыттисем пирки тăватă вăрăм вăхăтра, хĕрĕх пĕр тăрса юлнă. Райисполкома çитнĕ кĕнекене çак ялсем çинчен нимĕçсем ватса çунтарса пĕтер-

нĕ çуртсене хисепле мăшне çитнине тĕрĕслесе пăхнă. Пысăк хут листи çинче цифрăсен колонкисем. Вĕсем пĕр стра-ницăпа кĕрейман, тепĕр страница çине кушнă. Цифрăсем çапла тĕрĕс: пĕ-тĕм районĕпе шутласассăн, нимĕçсем хресченсен 1300 ытла çуртне вутса çунтарса янă, 20 шкула, 14 клуба вут тĕртсе çунтарнă, колхозсен общественнă çурчĕсене, контурсене, электро-станцисене, ялсем вăтăм пĕтĕмпех, арман-сене, тимĕрçĕ лаççисене — 438 çурта çун-тарса янă. Хресченсен тата колхозсен çак енче фашистсем сахалтан та 4.745.000 тенкĕлĕх сиен курнă.

Нимĕçсем ялсене — пĕтĕм-пишлĕ-пĕр, малтанах шуйттан çунтарма туйăм пăхмасăр, ялсене çаратнă. Çав вĕç Германи çак вăхăтра çаратнă халăха. Çав вĕç Германи çак вăхăтра пурĕ ялсем тăрăх пулса пынă. Çав халăхсене чылайăн çунтарнă пурăн-малла тăвас тесе хурласа, кашни пĕр-пĕр хăвăрт кайнă... Офицерсем хушнипе салтаксем колхозники колхознике, çав ĕç пĕтĕм хăна çынсене, ялсене тухнă, ялсенче ĕç... чăх-чĕп те хăварман.

Вĕсĕ урăх хуçалăхсенче пурăнмалли хушăра нимĕçсем хресченсенчен 2.000 ĕне, 1.540 сысна, 4.000 ытла сурăх, 90.000 ытла чăх-чĕп, 4.000 ытла центнер тырă туртса илнĕ. Тата 1.000 тенкĕлĕх пĕр урăх пурлăх тыртса кайнă. Çаратнă тырă тата колхозсенчен 1.000.000 тенкĕ... пĕр пус та парман.

Тырă налогĕсем... Вĕсем çĕкелĕмпе... пĕр тул пек хресченсен чылай пăхнă. Нимĕçсен тырă çак вăхăтра кашни килтен Германи патшалăхĕсене туртса ил-нă. Çаратса тунă тырă пуçне пĕчĕк Германия хресченсене туртса кĕнĕ. Тата хăйсен Самарлăн... колхоз... колхозра 100 хуçалăхран 80 тонна тыр-нă туртса илнĕ. Чылай килсене фашистсем пĕр пĕрчĕ те хăвармасăр, тырра пĕтĕмпех туртса илнĕ. Хуçисен тутар... çынсен килĕ... хур-ниме... пулнă.

Оккупантсем колхозсене 126.000 цент-нер тулă тата урпа, 36.000 центнер куку-руза, 29.000 центнер хĕвелçаврăнăш тата ытти йышши тырă сахал мар туртса илнĕ. Çаратса тунă тырăсене нимĕçсем Германи хресчене туртса янă. Хĕрлĕ Çар вăйлă тăрса ăçта-ха тыр хăвăрт çавăн пек тыттарнă.

Кашни акт — айăпламалли акт пек илтĕнет.

«Червонный Жовтень» колхоза çырнă акт çинче пĕр хăйсенчен хупса çапла çырса тухнă: «Фашистсем ипре ăçта хăйсене пулăкăн... вĕсен ĕç тулнарĕ».

Тĕрĕс, вĕсен ĕçĕ ăнăçлă пулмарĕ. Фа-шистсен пысăкăн Германи ĕçĕ халăх ĕçне тăвакансене тесе сассисем пĕтĕм пичченех хăшкăрасçĕ. Геббельс ыттин-сем те халасçĕ, вăтанмасçĕ. Анчах та Украинăри хресчен хыпарлăх улт-ахалăх... Çак кун «çĕнĕ тĕрĕслĕх» мĕн пулнине пурте ăнланнă.

Суйса ирттĕ, ялсем хăйсен çуран-чен сывалăç, анчах фашистсен пир «Ни-мĕç оккупанчĕ» тенĕ çамка асăнасçа... этемсем ĕмĕр-ĕмĕр вĕрĕнĕç.

Я. МАКАРЕНКО.

(«Правда»).

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Калинин фрончĕ). Укерчĕк çинче: С. Лобода майорăн подразделенийĕнчи автоматчиксем противник çине пересçĕ.

Н. БИТМАН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Тылран пырса çапни

КАРЕЛИ ФРОНЧĔ, апрелĕн 7-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Белоскурский юлташ командир пулса ертсе пыракан йĕл-тĕрçĕсен отрячĕ фашистсен гарнизонне пĕтерсе тăкнă, гитлеровецсен 230 сал-такне тата 24 офицерне вĕлернĕ хыç-çăн вăрман тăрăх хăйсен чаçне тав-рăннă.

Йĕлтĕрçĕсен отрячĕ хăюллăн пырса тапăннăшăн тăшман çавтери тарăхса çитнĕ. Совет воинĕсен йĕрĕпе, вĕсене тытса илсе пĕтерсе тăкас шухăшпа, чи пуçсăр гитлеровецсен виçĕ ротине янă.

Бандитсем засада тунă та Белоскур-ский отрячĕн тĕп вăйне хăйне хÿтĕ-лесе тăракан пайĕнчен уйăрнă. Гит-леровецсем ĕнтĕ çĕнтертĕмĕрех кусене тесе савăннă. Вĕсем Совет боецĕсене çакăн пек кăшкăрса калаçнă: «Парăнăр! Сире пĕтĕмпех çавăрса илнĕ!»

Анчах сасартăк çав вăхăтра вăрă-хурахсен банди хыçĕнчи пĕчĕк сăрт айĕнчен красноармеецсем «ура» кăш-кăрни хăватлăн илтĕнсе кайнă. Сăрт-ран аялалла тăшман çине пирĕн 22 паттăр разведчик ыткăннă. Вĕсене хăйсен юлташĕсене çăлма приказ панă мĕн. Вĕсем винтовкисене тăшман çи-нелле тытса çил пек хăвăрт пынă. Кĕтмен çĕртен тылран пырса çапни фашистсене аптăратса ÿкернĕ. Вĕсем, хăраса ÿкнĕскерсем, разведчиксем мĕн чухлĕн пулнине сисеймен, вĕсем хăй-сем çине тăвăл пек тапăнса пыракан хăюллă совет воинĕсене, штык вĕççĕн тытăçса çапăçма хатĕр воинсене çеç курнă. Çапла вара фашистсем, урисен-чен пуçласа пуçĕсене çитиччен хĕç-пăшалланнă вăрă-хурахсем, хăйсем 400-ĕн пулсассăн та, хăюллă 22 боеца хирĕç тăраймăн. Пĕр вăхăтра çапах та офицерсем, хăйсен çухалса кайнă бан-дичĕсене пухса, пирĕн паттăрсене хи-рĕç тăма хăтланасшăн пулнă. Вĕсен-чен пĕри, хăйĕн пистолетне тĕллесе, пирĕн пĕр разведчика, лейтенант Оме-лина персе ÿкерме хăтланнă. Анчах Омелин хăй те пистолетне тăшман çи-не тĕлленĕ. Вăрă-хурахсен офицерĕн пистолечĕ осечка панă, совет пистоле-чĕ фашистсен пистолетĕнчен лайăхрах пулнă. Унăн пульли гитлерла вăрă-хурахăн пуçне чÿлмеке çĕмĕрнĕ пек çĕмĕрсе пăрахнă.

Пирĕн разведчиксем гитлеровецсене калама çук хăратса пăрахнă. Фашист-сен виçĕ роти, çапăçу хирне 50 ытла виле, 4 станковăй, 2 ручной пулемет, минометсем тата нумай автоматсем пăрахса хăварса, вăрмана тарнă.

Советăн 22 боецĕ çапла тăшмана хăюллăн та кĕтмен çĕртен пырса çап-са, хăйсен отрядне çăлса хăварнă.

П. БАРАННИКОВ.

Нимĕçсен сывлăшри десантне мĕнле аркатса тăкнă

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, апрелĕн 6-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Нимĕçсем темиçе хут-чен те пирĕн позицисем çине контрата-ка туса пăхнă, анчах вĕсене кашнинчех пысăк çухатусем кÿрсе каялла хăваласа янă. Çакна кура нимĕçсен командовани-йĕ пирĕн сулахай флангран автоматчик-семпе пулеметчиксен десантне парашют-па антарма шухăш тытнă.

Çапăçу хĕрсе пынă вăхăтра Н-ски часть вырнаçнă тĕлте нимĕçсен самоле-чĕсем курăнса кайнă. Вăхăт нумай та иртмен — çав самолетсенчен парашю-тистсем анма тытăннă. Парашютист-пулеметчиксем Щукин, Либухов тата Мишанский юлташсем куç сиктермесĕр сывлăшра мĕн пулса иртнине сăнаса тăнă. Тăшман парашютисчĕсем çĕр çи-нелле сывхарса пынă. Акă пĕри сывхар-нă, тепри, выççĕмĕшĕ... вуннăшĕ, вăтă-рăшĕ... Сывлăшри десантра 60 фашист пулнă. Пулеметчиксем çĕр çине анакан парашютистсем çине вут çумăр çугар-ма тытăннă. Кашни пемессерен пĕр вă-рă-хурахĕ пĕтнĕ.

Виçĕ пулеметчик сывлăшрах нимĕçсен 57 парашютистне пĕтерсе тăкнă.

Флангран сывлăшри десант антарса пире çапма хăтланнинчен нимĕн ĕç те тухман, нимĕçсем пĕр утăм та малалла каяйман.

И. ДЕНИСОВ.

Чăваш боецĕсене гвардеецсем саламларĕç

Пирĕн часть арми командованийĕнчен приказ илчĕ. Ку приказ тăрăх, Х. пунк-тĕнче хытă çирĕпленсе тăнă фашистсен гарнизонне çĕмĕрекен Хĕрлĕ Çар чаç-сене васкавлă груз леçсе памалла. Ни-мĕçсен çарĕн командованийĕ çак Х. пунктĕнчи войскăсен гарнизонĕ умне уйрăмăнах пысăк задача лартнă пулнă. Пунктран тăвата енелле шоссе çулĕ каять. Анчах çак шоссе çулĕсенчен пи-рĕншĕн чи кирли хĕвеланăç енелле ка-яканни пулать. Каялла чакакан нимĕç çарĕсене çак пунктран хĕссе кăларни, парăнмасан пĕр фашист юлмиччен пĕтерсе тăкни—пирĕн Хĕрлĕ Çар чаçĕ-сене хĕвеланăçнелле кайма çул уçса парать. Çакăн çинчен тата арми коман-дованийĕ панă приказа хăвăрт та тĕрĕс-тĕкел пурнăçа кĕртме кирли çинчен ха-мăр боецсене ăнлантарса панă хыççăн эпир боевой приказа пурнăçа кĕртме çул çине тухрăмăр.

Колонна П. ятлă яла çитрĕ. Пирĕн ко-лонна пĕчĕк мар. Обозри лавсем çине пĕр сехет хушшинчех темиçе çĕр сна-ряд тата мина тиерĕмĕр. Сисмелле те мар, пĕчĕк вăрмантан лав хыççăн лав конвеер пек тухса тăрать. Вăхăт нумай та иртмерĕ, темиçе çул хушши колхоз-ра бригадир пулса ĕçленĕ, халĕ отделе-ни командирĕ пулса тăракан, — ватă мар, анчах çамрăках та мар Седов юл-таш — колонна начальникне: «Товарищ политрук, колонна в составе... подвод к рейсу готова, погружены снаряды и мины» тесе рапорт пачĕ.

Çĕрле. Темиçе километра тăсăлакан обоз фронтăн малти линине снарядсем, минăсем илсе каять. Кашни боец хăйĕн лавĕ çине тиенĕ кашни мина тата каш-ни снаряд гитлеровецсемшĕн «тутлă кучченеç» пулнине лайăх ăнланать. Вă-хăтра çитерсе памалла, пĕр ещĕкне те çĕмĕрмелле мар, çухатмалла мар, мĕн-шĕн тесен пире темиçе боец-артилле-рист, боец-минометчик чĕререн кĕтсе тă-рассĕ. Çакăн çинчен шухăшласа пырас-çĕ пирĕн боец-обозниксем.

Маршрутăн çуррине кайса, пĕр яла çитсе кĕтĕмĕр. Ялне фашистсем пĕр кил юлмиччченех çунтарса янă. Унăн ятне пĕр çунмă юпа çине çырса çапнă хăма-ран çеç вăл С. ятлă пул-нине пĕлтĕмĕр. Канмалли вăхăт та çи-тет ĕнтĕ. Сасартăк сывлăшра мотор кĕр-лени илтĕнет. «На воздух!» тесе ко-манда паратăп. Боецсем çак приказа пĕр-пĕрин патне хăвăрт çитерессĕ, ла-шасене тăратассĕ, пурте чул катăкĕ пек сикленмесĕр выртассĕ. Тăшман стервят-никĕсем пирĕн обоз çине бомбăсем пă-рахассĕ, пулеметран пересçĕ. Вĕсем пи-рĕн обоз пыракан çул тăрăх калле-мал-ле вĕçессĕ. Йывăр вăхăт! Боецсем хăй-сене тытма пĕлмен пулсан, лашасене май килнĕ таран маскировка тума пĕл-мен пулсан, темиçе боец, темиçе лаша стройран тухма, темиçе ещĕк хаклă груз пĕтме пултаратчĕ. Матвеев, Пав-лов боецсем тата ыт. те, тăшман ави-ацийĕ вĕçĕ-хĕррисĕр бомба пăрахнă чухнех, хырăм çинче пластунла шуса хăйсен лавĕсене йывăçсем айне илсе кайса тăратассĕ. Çак майпа вĕсем фронтшăн хаклă япаласене те, лашасене те çăлса хăварчĕç. Хăюллă боецсем хăйсен примерĕпе ытти боецсене те ывăрлăха çĕнтерме, фронтшăн темĕн пек кирлĕ груза çăлса хăварма хавхă-лантарчĕç. Тÿрех калас пулать, нимĕç-сем, фашистсем тÿрĕ те тĕл пенипе мухтанма пултараймассĕ. Пирĕн обоз тĕлĕнче 25—30 минута хушши нимĕн йĕр-кесĕр вĕçсе çÿресе темиçе бомба пăрах-ни, темиçе лента патрон пĕтерни ни-мĕçсен сывлăшри бандичĕсене нимĕнле результат та памарĕ. Пĕтĕм обоз çак бомбежкăран пĕр сиенсĕр тухрĕ, хăйĕн маршручĕпе каллех малалла кайрĕ.

Кунтан та ытларах тепĕр пысăк савă-нăç пулчĕ. Фашистла бандитсем пирĕн обоз çине бомбăсем пăрахнă вăхăтра пирĕн хĕрлĕ çăлтăрлă икĕ истребитель кĕрлесе тухрĕç. Вĕсем темиçе минута хушшинчех тăшмана хирĕç çапăçăва кĕчĕç. Сталинла соколсем кĕске вăхăтра нимĕçсен пĕр бомбардировщикне персе антарчĕç, фашистсен летчикĕ хăйĕн ви-лĕмне тупрĕ, ыттисене хăвалăса ячĕç. Çак кунхине эпир пыракан çул çинче кăна нимĕçсен виçĕ бомбардировщикне персе антарни çинчен каласа пачĕç пире юлташсем.

Урнă йытă вилес умĕн тискерленсе каять. Фашистла бандитсем те, хăйсен вилĕмĕ çывхарса килнине курса, çавте-ри тискерленсе пыраççĕ. Вĕсен бомба-дировщикĕсем нумай чухне çар объек-чĕсене мар, мирлĕ ялсем çинех вуншар бомба пăрахаççĕ. Çапла пулчĕ Н. сас-паллинчен пуçланакан ялта. Ку ялта çар чаçĕ те тăмасть, çар хатĕрĕсем те çук, анчах виçĕ сăхан çак нимĕн айăг-сăр ял çине 15 бомба пăрахрĕ. Анчах та ÿсĕр фашистсем пăрахнă бомбăсем пи-рĕн обоз çине те, ялти пĕр çурт çине те ÿкмерĕç. Нимĕн сиенсĕр хамăр çул-пах малалла кайрăмăр.

— Хăйсен çарĕн командованине: «со-вет войскин боеприпассем турттаракан обозĕ çине бомбăсем пăрахса темиçе ла-ран тăракан обоза пĕтертĕмĕр тата пĕр ялта тăракан çар чаçне пĕтерсе тăкрă-мăр» тесе рапорт пачĕç пулмалла ĕнтĕ, — тесе тăрăхласа илчĕ пирĕн боец, — çара киличчен ялсовет испол-ком секретарĕ пулнă, халĕ старши по-возочнăй пулса ĕçлекен Матвеев юлташ.

— ...Хĕрлĕ Çар валли чаплă 25 лаша ÿстерсе патăм, 25 лашине те районри комисси отлично тесе йышăнчĕ; халĕ акă лашасемпех фронтăн малти линине боеприпассем турттарса паратăп. Ха-мăрăн артиллеристсене, минометчиксене чи кирлĕ япаласем хăвăрт та вăхăтра леçсе паратăп, — тет мухтанма юрат-ман, анчах та ĕçе чĕререн юратса тăва-кан боец Павлов юлташ.

Пирĕн обозра чăваш боецĕсем нумай. Вĕсем хушшинче Матвеевпа Павлов юл-ташсем иккĕшĕ те чăваш.

Вăрманта лашасене кантартăмăр. Тие-нĕ грузсем пурте йĕркеллине тĕрĕсле-рĕмĕр. С. ялĕнчен сылтăмалла пăрăн-сан, хамăрăн мухтавлă саперсем касса тунă çулпа, çитмелли вырăна васкасах кайрăмăр. Сехет стрелки кăнтăрла ирт-ни 8 сехет çитнине кăтартать. Приказ хушнă тăрăх тепĕр тăвата сехетрен пирĕн хамăр груза Х. пунктри нимĕçсен гарнизонне çĕмĕрекен артиллеристсемпе минометчиксене çитерсе памалла.

Политрук Р. ШАШКОВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

Артиллери вучĕ

(Калав)

Юханшыв хĕррипе тăсăлса выртакан чăнкă сăрт çинче пысăк мар ватă юман ларать. Унпа юнашарах касса тикĕсле-нĕ пек пĕр виçеллĕ хыр йывăççисем хăйсен лапсака тураттисене усса ларас-çĕ. Юман кунта пире усă кÿрессишĕ-нех шăтса ÿснĕн туйăнать.

Виççĕмĕш кун ĕнтĕ çак юман тăр-ринчен анмасăр ырми-канми ĕçлет пи-рĕн маттур Иван Петренко. Ăна кунта килти пекех туйăнать пулас: кунта апатланать вăл, кунтах канать, кунтах унăн пурнăçĕ малалла шăвать. Акă паян юлташĕсем Ивана икĕ çыру кÿрсе пачĕç, вĕсене вăл тирпейлĕн пуçтарса кĕсъене чикрĕ. Çырупа пĕрлех çыпă-çуллă алăпа чĕркенĕ пĕчĕк пакет—пар-не илчĕ. Камран вăл, мĕн унта—па-кетра,—Иваншăн паллă мар. Анчах унăн чĕри ку пакет ăшă кăмăл кÿнине туять.

Ларать вăл юман тăрринче, сайра хутран блиндажри юлташĕсемпе теле-фон тăрăх калаçса илет, вăхăчĕпе хăй-пе хăй калаçать, анчах хăйĕн сивĕч куçне тăшман «йăва çавăрнă» вырăнтан пĕр самантлăха та вĕçертмест. Ĕçлет вăл хастарлăн. Аллинче унăн хутпа карандаш, карттă, бинокль, телефон трубки.

Юханшыв леш енчи лапамлăх кунтан тĕкĕр çинчи пекех курăнать. Авă ял. Ун тавра тăшман. Вăл йĕплĕ пралукпа çавăрса карта тытнă, окопсем, блин-дажсемпе землянкăсем чавса çирĕплен-се ларнă. Шăнса ĕнтĕркенĕ фрицсемпе гансем окопсем тăрăх пĕшкĕнсе çара çерçисем пек чупкаласа çÿреççĕ. Урамсемпе кĕтессенче автомашинăсем, лавсем. Салтаксем ушкăнăн-ушкăнăн е пĕрерĕн-пĕрерĕн унталла-кунталла ут-калаççĕ.

Пурне те курать Иван. Фашистла бандитсем совет çыннисене килсенчен хăваласа кăларнине, вĕсене блиндаж семпе окопсем чавма конвойпа илсе кайнине, хресченсен килçурчĕсене çĕ-мĕрсе, вĕсенчен дзотсем тунине, хрес-ченсене хĕненине, вĕсен килĕсенчен минтерсемпе тÿшексем, тумтирсем, ыт-ти пурлăхсем йăтса тухса, çаратнă япаласене урам варринчех бандитсем хушшинче валеçнине, чиркÿ патĕнче хресченсен ĕнисемпе сурăхĕсене пус-нине, чи хăрушши, чи тискерри—уй хапхи çинче виле çакăнса тănине ку-рать вăл.

Унăн чĕри тулса çитет.

Иванпа ял хушши пĕр çухрăм. Вăл ку ялта миçе çурт, миçе сарай-вите пуррине шутласа кăларнă. Ăçта мĕн выртнине, ăçта мĕн тăнине Иван ла-йăх пĕлет. Уншăн халĕ кашни юр купи патĕнче кашни йывăç тĕмĕ тавра, каш-ни кĕтесре е урамра мĕн пурри пурте паллă. Ку яла мĕн пĕчĕкренпех пĕлнĕн туйăнать ăна.

Виçĕ кун, виçĕ каç ларчĕ Иван çак юман тăрринче. Нумай чăтăмлăх кир-лĕ ун пек чухне. Çак чăтăмлăх Иванăн çителĕклĕ. Унăн сивĕч куçĕнчен нимĕн те вĕçерĕнмен.

Тăваттăмĕш кун, кăнтăрла умĕн, эпир блиндажра апатланса ларнă чух-не, телефон шăнкăртатрĕ. «Петренко чĕнет»,—терĕ Голиков юлташ, подразде-лени командирĕ. — Четвергов юлташ, батальона астутар, хатĕр тăччăр, Иван ахальтен чĕнекен мар.—Лейтенант Чет-вергов тепĕр телефон трубкине алла тытрĕ.

— Командир юлташ,—янрать Пет-ренко сасси мембранăра,—пурте хатĕр. Ман шутпа чи лайăх вăхăт паян, имен-но паян...

— Ну, асту Петренко, мĕн те пулин çитмест пулсан, паллах, эсĕ пĕлетĕн вĕт мана,—терĕ те Голиков юлташ, те-лефон трубкине вырăна хучĕ. Петрен-ко патне тухса чупрĕ. Эпир пĕшкĕнсе, юртан кукăласа тунă канав тăрăх Петренко патне пытăмăр.

— Командир юлташ,—терĕ халлĕхе юман çумĕнчи тĕме патĕнче выртакан Петренко,—эпĕ сирĕнтен çакна ыйтма хăятăп: батарейăна парсамăрччĕ мана.

— Мĕнле апла, мĕн тума?

Иван Петренко пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Вăл кĕсъерен икĕ çыру кăларса, Голи-ков юлташа пачĕ.

«Ваня, юратнă ывăлăм. Пирĕн килте питĕ пысăк хуйăх,—çырать Агафия Ми-хайловна, Петренко амăшĕ.—Çĕнĕ çул каçхине пирĕн яла нимĕçсем вут тĕрт-се çунтарса ячĕç. Санăн арăмна, хĕра-чуна персе вĕлерчĕç, аçуна çакса вĕ-лерчĕç. Манăн сулахай куçа тĕртсе шăтарчĕç, эсĕ ĕмсе ÿснĕ кăкăра касса пăрахрĕç. Çав каçах пирĕн яла крас-ноармеецсем килнĕ, вĕсемпе пĕрле—Гриша, вăл пире санăн адресна парса хăварчĕ. Гриша мана госпитале ăсатрĕ. Эпĕ халĕ унта сываланăп...

Ваня, ывăлăм, аçушăн, маншăн, мă-шăрупа ачушăн—тавăр! Пĕтĕм чĕререн пиллетĕп—тавăр!..»

Иванăн йăлтăртатса тăракан куçĕсем тĕксĕмленчĕç, шывланчĕç, унăн тăнла-вĕнчи икĕ юн тымарĕ тулса, çурăлса каяс пек пулчĕç.

«Тăван çĕршывăн хаклă защитникĕ!» —вулатпăр эпир тепĕр çырăвĕнче. Ку çырăва Мускаври государственнăй консерватори çумĕнчи музыка учили-щинче вĕренекен студентка Лидия Клюкач çырать.

Иван Петренко çилĕпе тулнă куçĕсем-пе тăшман енелле сивĕн пăхса илчĕ, унтан Голиков юлташ умне çывăхарах пырса тăчĕ те:

— Командир юлташ, ирĕк парсамăр-ччĕ,—ыйтрĕ вăл.

— Лăплан, лăплан Петренко,—Голи-ков юлташ Ивана çурăмран ăшшăн пек ачашласа илчĕ те, сасартăк, ним шар-ламасăр, блиндаж еннелле васкаса утрĕ.

Штабра кĕске канашлу пулса иртрĕ.

— Четвергов юлташ, ан кÿрен, хăвах куратăн вĕт, Петренко асапланать. Ку операцире санăн «посредник» пулма тивет. Ну, ку-мĕн пулас пулсан, хăвах пĕлетĕн, хатĕр тăр. — Голиков юлташ телефон трубкине илчĕ те Петренкона хăй патне чĕнчĕ.

Этем ун пек савăннине курман эпир ку таранччен. Петренко, командир йы-шăнăвне илтсенех, блиндажри пур пек боецсемпе командирсене ыталаса чуп туса тухрĕ. Иванăн савăнăçне сăмахпа каласа пама хĕн, ăна çын хăйĕн ту-йăмĕпе кăна туйса илме пултарать. Сасартăк хăйне тÿп-тÿрĕ тытрĕ те, сум-кăран хĕрлĕ, симĕс, хура тĕслĕ каран-дашсемпе чĕрсе тухнă карттăна, унтан хăйне майлă çырнă схема çине пăхса, хăйĕн шухăшне, хăйĕн планне хавхала-нуллăн каласа пачĕ.

— Командир юлташ,—терĕ вăл юлаш-кинчен,—мана çитмĕл виçĕ снаряд кирлĕ.

Ку хыпар пурне те урăран çапса ÿкернĕ пекех туйăнчĕ. Мĕншĕн çитмĕл виçĕ снаряд, мĕншĕн çĕрçитмĕл виççĕ мар, е икçĕр мар? Ун çинчен Иван пĕр сăмах та хушмарĕ, анчах Голиков юл-таш йăл кулса илни пире нумай япала çинчен ăнлантарчĕ.

...Кун каç енне сулăнчĕ. Батальон наступление кайма хатĕрленсе çитрĕ. Батарейăра хĕрÿллĕ ĕç пырать. Боец Иван Петренко командованине хăй çи-пе илни пурне те тĕлĕнтермеллипех пĕлĕнтерчĕ, ку хыпар çиçĕм пек пур çĕре те çитсе çавăрăнчĕ. Огневиксем хумханаççĕ, çав вăхăтрах савăнаççĕ, вĕсем темĕнле пысăк ĕç пуласси-не туяççĕ.

Голиковпа Четвергов юлташсем наб-людательнăй пункта пычĕç. Иван Петренко яланхи пекех, васкамасăр хăйĕн ĕçне тăвать, вăл час-часах кар-тă çине, унтан—схема çине е сехет çине пăхса илет. Хумханать, ăна вăл пытарасшăн тем пекех тăрăшать, ан-чах хумхану çиеле тухать. Голиков юлташ та час-часах куç айккипе Пет-ренко çине пăхса илет, вăл та хумха-нать, анчах хăй хумханнине пусарать.

Палăртнă вăхăт çитрĕ. Эпир пурсăмăр та пĕр-пĕрин çине пăхса, самантлăха пĕр сăмах шарламасăр тăтăмăр. Иван Петренко, хăйĕн кĕлеткине тÿрĕ тытса, Голиков юлташ патне утса пы-чĕ. Вĕсем пĕрне-пĕри ăшă куçсемпе пăхса илчĕç, пĕр сăмахсăрах пĕр-пĕр-не ăнланчĕç. Голиков юлташ пуç тай-рĕ. Петренко алла телефон трубкине илчĕ. Сулахай аллинче—карттăпа схе-ма. Питне тăшман еннелле çавăрăнса тăчĕ, çăтĕкне çамка çинчен пуç тÿпи-нелле çĕклерĕ.

— Ребятки, слушайте меня,—терĕ вăл телефон трубкине тути патне илсе пырса.—Хамăр аттесемшĕн, тус-семпе тăвансемшĕн, ачасемпе мăшăр-семшĕн, хамăрăн ирĕклĕхшĕн, пĕр че-ретпе—огонь!.

Пĕтĕм вăрман уласа кайрĕ. Çĕр чĕт-ренчĕ, тăçта инçе чăнкă сăрт ишĕлсе аннăн туйăнчĕ. Пирĕн пуççем урлă тăшман еннелле çĕклем вилĕм, пирĕн тарăхăва, пирĕн курайманлăха йăтса, Петренко снарячĕсем шăхăра-шăхăра вĕçсе кайрĕç. Часах чиркÿ патĕнчи садра, хÿтлĕхе пытаннă виçĕ танк па-тĕнче, тăпра юпи çĕкленчĕ, танксем айккинелле тайăлса йăванса ÿкрĕç.

Урамсенче, килçуртсенчен сике-сике тухакан гитлеровецсем, антраса ÿкнĕ кашкăрсем пек, йăпшăнса чупкаламa пуçларĕç.

Тепĕр залп. Сад тулашĕнче тăракан автомашинăсен таткисем тÿпенелле сирпĕне-сирпĕне кайрĕç, сарай çумĕнчи çатанпа хупласа пытарнă бронемашина çаврăнса ÿкрĕ.

— Огонь!

Гансемпе фрицсем вырнаçнă блин-даж çĕрпе танлашрĕ. Акă, тупă турт-тарса пыракан трактор-тягач чарăнса тăчĕ, тупă прислуги сирпĕнсе кайрĕ. Вăхăт нумаях та иртмерĕ, Иван Пет-ренко сăмахне итленĕ пекех, тата виçĕ снаряд çурăлса, хăйсен вăйĕпе нимĕç-сен сăнав пунктне, унтан—штаб выр-наçнă çурта ишсе антарчĕç, тепĕ залп, татах залп... Нимĕç миномечĕсен батарейи, пирĕн еннелле хăйĕн тискер çăварĕнчен пульăсем тăкакан пулемет-сем лакса ларчĕç.

Вăрман тăрăх—«ура!», яланах çĕн-терÿ кÿрекен хăватлă сасă янраса кайрĕ. Унăн хăвачĕ ÿснĕçемĕн ÿсе пы-рать. Пирĕн пехотинецсем артиллери вучĕн хÿтлĕхĕпе атакăна ыткăнчĕç.

— Малалла, малалла! — кăшкăрать Иван Петренко, аллипе пехотинецсене саламласа.—Огонь! Тата хытăрах, та-тах та ытларах парăр! А... (кунта Иван çирĕп сăмахпа вăрçса илчĕ) пĕ-çерет иккен! Вот, вот, чуеш, голюка силу мою.

Иван Петренко ниçĕ тăрăх та юхать, вăл хăмач пек хĕрлĕ, куçĕсем унăн вут пек çунаççĕ, тулли савăнăçпа йăлкăшса çиçсе тăраççĕ.

— Товарыш командир! Бачыш мову моево сердечко,—тет вăл Голиков юл-таш çине пăхса.

— Бачу, Ваня, бачу!—Голиков ун патне чупса пычĕ, вĕсем ыталанса чуп туса илчĕç. Батальон командирĕ тăш-мана атакăлакан пехотинецсем патне чупрĕ.

Çапăçу хĕрсе пырать. Пирĕн пехоти-нецсем ял урамне кĕчĕç. Çак самантра батальон командирĕ боецсем умĕнче, малта, боецсене хавхалантарса ертсе пырать. Тăшман пĕр йĕркесĕр тарать. Акă, икĕ çăмăл автомашина мăн çул çине тухрĕç—офицерсем тараççĕ. Ма-шинăсем хыççăн, минренĕ сурăхсем пек, салтаксем чупаççĕ, вĕсем чикелене-чи-келене ÿкеççĕ. Совет пульлисем хуса çитсе çапса ÿкереççĕ вĕсене.

Иван Петренко батарейăн пĕтĕм вут-не мăн çул çине тăкать. Артиллерист-сене минометчиксемпе пулеметчиксем пулăшаççĕ. Çула вутпа пÿлсе лартрĕç, гитлеровецсене вут кăшăлне çавăрса илчĕç. Çул çинчи икĕ машина татăкăн-татăкăн арканса кайрĕ.

...Юр — тискер хура юнпа, усал юн-па витĕнчĕ. Урамсенче, уйра фашистла бандитсен виллисем, лучăрканнă кĕлет-кисем, минометсемпе пулеметсем, маши-нăсемпе лавсем, тупăсемпе трактор-тягачсем сапаланса выртаççĕ. Кунта эсэсовецсен пĕр полкĕн кун-çулĕ чыс-сăр, намăслăн пĕтрĕ—вĕçленчĕ.

Тăшманăн вăйлăн çирĕплетнĕ оборона линийĕсене çĕмĕрсе, вăл çав тери хаяр-рăн хирĕçнине сирсе пăрахса, пирĕн чаçсем хĕвеланăç еннелле çĕнтерÿллĕн малалла каяççĕ. Пирĕн наступлени кунсерен хăватланнăçемĕн хăватланса пырать. Унăн хăватне Иван Петренко пек хăюллă та шиксĕр паттăрсем ÿс-терсе пыраççĕ.

Çĕнтерÿ—хăюллă та пĕр шиксĕр пат-тăрсене юратать, вĕсене пирĕн тăван çĕршыв, пирĕн халăх чысла хисеп-лет.

Политрук МИХ. ЯКИМОВ.

Чăваш республикинчи ĕçсыннисем фронта пулăшаççĕ

Делегаци фронта мĕн илсе каять

Чăваш республикинчи ĕçсыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсене валли Май праздникĕ ячĕпе парнесем пухас ĕçе анлăн сарса ячĕç. Рабочисем, служащисем тата колхозниксем Хĕрлĕ Çар боецĕсене ярса пама тĕрлĕ япаласем, апат-çимĕçсем хурса посылкăсем хатĕрлерĕç. Çак ĕç республикăра пысăк çĕкленӳпе пулса иртрĕ. Пирĕн ĕçсыннисем хăйсен Хĕрлĕ Çарне тăвăнла юратнине, унăн тăрăшнине тепĕр хут кăтартса пачĕç.

Çак кунсенче фронта каякан пирĕн делегаци генерал-майор Кирюхин чаçĕнчи боецсене валли çакан пек парнесем илсе каять: 6000 килограмм ытларах аш-какай, 1000 килограмм ытларах çу, 520 килограмм пыл, 2500 килограмм ытларах пĕремĕк, 1250 килограмм печени, 2000 килограмм ытларах колбаса, 15 тонна çăкăр, 21.000 штука ытла çăмарта, ăшаланă чăхсем, хурсем, кăвакалсем—475 ытла, 1300 килограмм ытла табак, 3000 литр ытла эрех, 1000 килограмм ытла конфетка, 300 килограмм ытла чăкăт, музыка инструменчĕсем, мотоцикл тата ытти япаласемпе çимĕçсем те нумай илсе каять.

Парнесемпе пĕрле ĕçсыннисем боецсене ăшă кăмăлпа çырнă çырусем ярса параççĕ.

Васкавлă заказсем

Хальхи вăхăтра фронтри боецсем вилĕмрен хăрамасăр çапăçаççĕ пулсан, тылри çынсем вăя шеллемесĕр, канма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

Бенский юлташ директор пулса тăракан заводри А. Кинсбурский юлташ ертсе пыракан цех васкавлă заказ илнĕ: фронта кирлĕ çĕнĕ продукцие 10 кун хушшинче туса памалла. Заказ питех те ответлă пулнă. Цех коллективĕ ăна, фронтри боевой приказа пурнăçланă пекех, вăхăтра тата тĕрĕс пурнăçлама кирлине лайăх ăнланнă.

— Фронт ыйтнине тăвас пулать. Çĕр çывăрар мар та, туса парар, — тенĕ цехри малта пыракан рабочисем.

Коллектив çийĕнчех ĕçе тытăннă. Мастерсем, парти членĕ А. Малыхинпа комсомолец Р. Каневский юлташсем, ĕç вăйне пĕлсе вырнаçтарса тухнă, инструментсемпе материалсене кирлĕ пек хатĕрлесе хунă.

Вара хĕрӳ ĕç пуçланнă. Малтанхи рабочи аллине ахаль материал кăна кĕнĕ, иккĕмĕшĕ ăна каснă, виççĕмĕш шăтарнă. Çапла вуншар рабочисем материала кирлĕ пек улăштарса йĕркелесе пырса, юлашкинчен тăван Хĕрлĕ Çар валли питех те кирлĕ япала туса кăларнă. Ĕç хăвăртланнăçемĕн хăвăртланса, лайăхланнăçемĕн лайăхланса пынă. Рабочисем пĕр-пĕринпе ăмăртса, пĕр-пĕринчен ирттерсе ĕçленĕ. Продукци туса кăларассине кунран кун ӳстерсе тата лайăхлатса пынă. Малтанхи кун, сăмахран, 100 япала туса кăларнă пулсан, иккĕмĕш кунне — 125, виççĕмĕш кунне татах та ытларах туса кăларнă.. Саккăрмĕш кунне вара плана ытлашшипех тултарнă. Çапла коллектив, васкавлă заказа вунă кунра пурнăçлас вырăнне, саккăр кунрах пурнăçланă.

Çак вăхăтра цехри чылай рабочисем ывăнма пĕлмесĕр, смена хыççăн юлса та ĕçленĕ. Коммунистка Генкина, комсомолка Данилова юлташсем сменăри нормăсене кашни кун икĕ хут ирттерсе тултарнă. Çамрăк рабочисем Решетинпа Тамара Антипенко юлташсем те вĕсенчен юлман, пĕр деталь вырăнне икшер деталь тунă.

— Пирĕн рабочисем çĕршывпа фронт умĕнчи хăйсен обязанноçĕсене чыслăн пурнăçласа пыраççĕ, — тет цех начальникĕ Кинсбурский юлташ.

* * *

Парти кандидачĕ М. Цвасман юлташ ертсе пыракан цех çак юлашки вăхăтра пĕтĕмпех васкавлă заказсем тăвас енĕпе ĕçлет. Пĕрремĕш кварталта панă васкавлă заказа вăл 138 процент тултарнă.

— Васкавлă заказ пирĕншĕн çĕнĕ пулнă, — каласа парать цех начальникĕ Цвасман юлташ. — Эпир ун пек продукци халиччен те туса кăларман. Çакăнпа пĕр вăхăтрах инструментсене те хатĕрлемелле, рабочисене те вĕрентмелле пулчĕ.

Цеха пынă çамрăксене ĕçе вĕрентес тĕлĕшпе опытлă рабочисенчен Макаренко, Оберман тата коммунист Свашенко юлташсем пархатарлă ĕçленĕ. Пĕрремĕш кварталта вĕсем кашниех икĕ-виçĕ çамрăка сложнăй тата ответлă ĕçе вĕрентсе çитернĕ. Вĕсем вĕрентнĕ çамрăксенчен комсомолка Гаврилова, Андреева тата Алексеева юлташсем халĕ нормăсене тăтăшах ирттерсе тултараççĕ.

Хальхи вăхăтра цех коллективĕ васкавлă çĕнĕ заказа пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлет. Ĕçсыннисен уявне—Майăн 1-мĕшне тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленнĕ май, коллектив çав заказа срокчен пурнăçлама, çĕнĕ тĕрлĕ тăвата продукци туса кăларас ĕçе вĕренсе çитме обязательство илнĕ. Çак обязательствăна пурнăçлассишĕн чылай рабочисем фронтри пек ĕçлеççĕ. Акă Клейман, Андреева, Глущенко т. ыт. те кулленхи заданисене 200-шер процент тултараççĕ. Фронтри боец тăшмана хирĕç кĕрешсе тунă кашни çĕнтерӳ çине тылри ĕçсынни кулленхи ĕçре çĕнĕ çитĕнӳ тунипе ответлет.

Т. ИВАНОВ.

ТĂВАНЛА ПУЛĂШУ

КУСЛАВККА. (Телефонпа). Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсемпе облаçсенчи колхозсене районри колхозниксем 150 центнер вăрлăхлăх тырă ярса пачĕç. «Правда» ялхуçалăх артелĕ 15 центнер тулă, пĕр пушмак пăру, пĕр кăçалхи пăру, 2 çăвăр сысна, путеккипе пĕрле пĕр сурăх тата 10 чăх уйăрса пачĕ. Çавăн пекех Чапаев ячĕпе тăракан колхоз 10 центнер тулă, пĕр сысна, «13 лет Октября» колхоз 6 центнер урпа, пĕр сурăх пачĕ.

Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсене тăванла пулăшу парасси районра сарăлсах пырать. **Н. ЛЬВОВ.**

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

КОЛХОЗНИКСЕН ÇИРĔП СĂМАХĔ

Германи вăрă-хуракĕ çарĕ пирĕн ирĕклĕ, телейлĕ пурнăç çине хăйĕн юнлă аллине çĕклерĕ. Нимĕç бандичĕсем нумай миллионлă совет халăхне чура тăвасшăн. [illegible]

Аслă сулпуç Сталин юлташ чĕннипе Чăваш çĕршыва хӳтĕлеме пĕтĕм совет халăхĕ çĕкленчĕ. [illegible]

«Тăшман поражени тӳсет, анчах та ăна аркатса тăкман-ха, — унтан та ытларах, — ăна пĕтерсе тăкман-ха. Тăшман вăйлă-ха. [illegible]» — Сталин юлташăн çак сăмахĕсене пирĕн колхозниксем лайăх ăнланаççĕ. [illegible]

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене большевикла çĕнтерсе пырса, Октябрьски районри колхозниксемпе колхозницăсем ялхуçалăхĕнче, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем турĕç. Вуншар колхозсем иртнĕ çул кашни гектартан çĕршер пăт тĕштырă туса илчĕç, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана ытлашшипех пурнăçларĕç. Колхозсен общественнăй выльăх-чĕрлĕхĕн хисепне пысăккăн ӳстерсе, çĕршывпа фронта аш-какай, сĕт-çу тата ытти тĕрлĕ продукцисем ытларах та ытларах парса тăраççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсемпе командирĕсен геройла ĕçĕсемпе хавхаланса, колхозсенчи ĕççыннисем татах та тимлĕрех, хастарлăрах ĕçлеççĕ, çĕршывпа фронта вăйлăн пулăшаççĕ. Пирĕн районри ĕççыннисем çĕршыв оборонин фондне 53.933 тенкĕ укçа, 107.145 тенкĕлĕх заем облигацисем тата 252 центнер ытла тĕштырă хывреç. Фронта çителĕклĕ таран вооружени туса парас тĕлĕшпе «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 35.468 тенкĕ, «Народный учитель» ятлă танксен колоннине тума 5349 тенкĕ, «Промкооперация» ятлă танксен соединенийе тума 5757 тенкĕ, МОПР ячĕпе пулашан танксен соединенийĕ тума 5377 тенкĕ, «Пионер Чувашии» танка тума 5.000 тенкĕ пухса пачĕç. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли [illegible] 7.307 тенкĕ укçа панă.

Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсене халăх хĕрӳллĕн юратать. [illegible] фронтри боецсем патне виçĕ тоннăна яхăн парнесем ăсатрăмăр. [illegible] районри ĕçсыннисем 335 кĕрĕк пиншак, [illegible] курткăсем— 101, шалаварсем — 91, 500 мулаххай, 664 мăшăр çăматă, [illegible] мăшăр алшинсем [illegible], 544 мăшăр чăлхасемпе носкисем тата ытти нумай япаласем пухса панă. «Труд», «Шипотреб» тата «Большевик» [illegible] пурнăçласа тăраççĕ.

[illegible] район пурĕ пĕр тоннăна яхăн парне хатĕрлесе ярать.

Уйхирсенчи ĕçсем пуçланас вăхăт çывхарса килчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа туса ирттерме хастарлăн хатĕрленеççĕ. Районри колхозсенчен нумайĕшĕ çуракине тухма хатĕрленсе çитрĕç, вăрлăх фондне чи паха тырăсем хыврĕç, транспорт инвентарĕсене хатĕрлесе çитерчĕç. Çуракине кăçал нумай хут лайăхрах ирттерсе, фронтпа çĕршыв валли татах та тухăçлăрах тырпул туса парассишĕн колхозниксем хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ.

— Тăван Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсем, командирсемпе политработниксем, нимĕç фашисчĕсене татах та вăйлăнрах çĕмĕрсе пырăр! Хаклă юлташсем, сире эпир колхозлă çирĕп сăмах паратпăр. Малашне те фронта вăйлăн пулăшса пырăпăр. Нимĕç фашисчĕсене пуçĕпех пĕтерсе тăкассишĕн çĕршывпа фронта активлăн пулăшса, вăйсене шеллемесĕр татах та лайăхрах ĕçлеме пулатпăр, — теççĕ колхозниксем пурте пĕр шухăшкăмăллă пулса. **И. ДОЛГОВ.**

ВКП(б) Октябрьски райкомĕн секретарĕ.

Фронта, упăшки вырăнне

ОКТЯБРЬСКОЕ. (Телефонпа). Нимĕç оккупанчĕсем аслă совет çĕршывĕ çине вăрçăпа килсенех Кутимĕр ялсовечĕн председателĕ комсомолец П. Яковлев юлташ тăван çĕршыва сыхлама Хĕрлĕ Çар ретне тăчĕ. Хăйĕн арăмне вăл тăван çĕршывшăн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме хушса хăварчĕ.

Комсомолка Настя Яковлева, çав сăмахсене яланах чĕрере тытса, хăйĕн пĕтĕм вăйне фронта пулăшас ĕçе хурса ĕçлерĕ. Вăл Кутимĕрти тулли мар вăтам шкулта вĕренекен ачасене коммунистла воспитани парса ӳстерес ĕçе ăшшăн та кăмăллăн туса пычĕ. Учительница пулса ачасене вĕрентнипе пĕрлех, вăл пионерсен аслă вожатăйĕ пулса ĕçлерĕ.

Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн, чыслăхĕшĕн, совет халăхĕн савăнăçлă, çутă пурнăçĕшĕн паттăррăн кĕрешсе, комсомолец П. Яковлев геройла вилĕмпе вилнĕ. Настя Яковлева ку йывăр хыпара çирĕппĕн кĕтсе илчĕ. Ирсĕр тăшмана курайманнипе тулчĕ унăн чĕри.

«Тавăратпăр çав ирсĕр фашистсене»—çак шухăшпа килчĕ вăл райкома. Хăйне фронта, çапăçăва яма ВКП(б) райкомĕнчен ӳкĕтлесе ыйтрĕ.

Çулăмлă патриот, комсомолка Настя Яковлева халĕ фронта кайрĕ.

В. ИГНАТЬЕВ.

ВКП(б) Октябрьски райкомĕн секретарĕ.

Фронта каякан делегацин составĕ

Чăваш республикинчи ĕçсыннисем Хĕрлĕ Çар паттăр боецĕсем валли пухнă парнесене фронта илсе кайма ятарласа делегаци уйăрнă. Делегацине Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ З. А. АНДРЕЕВА тата ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ А. М. МАТВЕЕВ юлташсем ертсе пыраççĕ. Делегаци составне çак юлташсем кĕртнĕ: ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ Р. Ф. ХАСЬЯНОВ, «Красная Чувашия» хаçатăн партотдел заведующийĕ С. С. МАКАРОВ, Канаш станцийĕнчи чи лайăх дежурнăй В. А. ЕФАНОВ, Шупашкарти «Индешня» мастерскойĕнчи чи лайăх стахановец П. А. ЕРШОВ, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕ А. А. ЕЛИЗАРОВ, Чкаловски районĕнчи «Маяк» колхоз колхозникĕ З. Ш. ШАЙДУЛЛИН тата Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхоз колхозникĕ А. А. ЯБЛОНСКИЙ юлташсем.

Делегаци çак кунсенче фронта тухса каймалла.

Улатăр районĕнчи ĕçсыннисем—фронтшăн

Улатăр районĕнчи ĕçсыннисем, [illegible] совет халăхĕ пекех, хамăрăн тăван çĕршыв оборонне тĕреклĕлетессишĕн [illegible]. Фронта пулăшас тĕп ĕçе [illegible] Патриотсем предприятисенче, промартельсенче, колхозсенче [illegible] тултараççĕ. Вăрçă кунĕсенче икшер, виçшер çыншăн ĕçлекен рабочисен йышĕ вăйлăн ӳсрĕ. Хĕрарăмсемпе хĕрачасен шутĕнчен çĕнĕ кадрсем вĕренсе çитĕнчĕç.

Тăван çĕршыва паттăррăн хӳтĕлекенсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕç пирĕн районра пысăк çĕкленӳпе пулса иртрĕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли район 1.794 килограмм çăм, 1.283 тир, 606 мăшăр çăматă, 124 кĕрĕк пиншак, 2.214 мулаххай тата шлем, 817 мăшăр перчаткăсемпе алшăлсем, 821 алшăлли, ăшă курткăсемпе шалаварсем, шарфсем, мамăк-тиртен çĕленĕ алсасем, фуфайкăсемпе свитерсем, кĕпе-йĕмсем, минтерсем, çивиттисем тата ытти нумай тĕрлĕ япаласем пухса панă.

Районри ĕçсыннисем кăçалхи çĕнĕ çул ячĕпе тата Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа фронта посылкăсем нумай ячĕç. Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 24 çул тултарнă уяв ячĕпе кăна пирĕн район фронтри боецсем патне 1.500 килограмм махорка, 150 килограмм пĕремĕкпе сухари, 420 килограмм колбаса, 60 килограмм çу, 163 килограмм пыл, 600 катăка яхăн супăнь, 231 алшăлли, 436 мăшăр носки тата ытти çимĕçсемпе япаласем ячĕ.

Рабочисемпе колхозниксем тата служащисем республикăри госпитальсенче сывалса пыракан аманнă боецсене тăтăшах пулăшу парса тăраççĕ. Вĕсене [illegible] фондне пирĕн район 830.942 тенкĕ укçа, 537.380 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем хывнă. Укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене 835.414 тенкĕлĕх çырăнса илнĕ, укçине пĕтĕмпех тӳлесе татнă.

Рабочисемпе колхозниксем тата служащисем хăйсем пуçарнипе тăтăшах воскресниксем туса ирттереççĕ. Çав воскресниксенче ĕçлесе илнĕ укçа-тенке йăлтах çĕршыв оборонин фондне хываççĕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли йĕлтĕрсем илме 44.066 тенкĕ укçа патăмăр, танксен колоннине тума 18.265 тенкĕ, «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 45.343 тенкĕ, Хĕрлĕ Çар валли поезд-мунчасем тума 13.040 тенкĕ пухса патăмăр.

Улатăр районĕнчи ĕççыннисем фронта, Хĕрлĕ Çара пулăшас тĕлĕшпе туса пыракан паха тĕслĕхсене татах та нумай илсе кăтартма пулать.

Пирĕн пулăшу кунран кун ӳссе пырать. Тăван паттăр боецсем ыйтнине çителĕклĕ таранах туса парассишĕн, фашистла ирсĕр тискер кайăксене малалла та вăйлăн çĕмĕрсе пырассишĕн эпир пурне те тăватпăр, хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне пур енлĕн те вăйлăн пулăшса тăрассишĕн татах та пысăкрах хастарлăхпа ĕçлетпĕр.

Л. КРАСИЛЬНИКОВ.

ВКП(б) Улатăр райкомĕн секретарĕ.

„ОСОАВИАХИМ“ КОЛХОЗ КИРЮХИН ГЕНЕРАЛ-МАЙОРА МОТОЦИКЛЕТ ПАРНЕЛЕТ

КУКЕÇ. Шупашкар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем генерал-майор Кирюхин юлташ чаçĕнчи боецсемпе командирсем тата политработниксем патне яма пысăк юратупа парнесем хатĕрлерĕç. Шупашкар районĕнчи ĕçсыннисем боецсем патне 150 килограмм пĕçерсе типĕтнĕ какай, 170 килограмм колбаса, 35 килограмм çу, çу çинче пĕçернĕ 60 чăх, 77 килограмм ытла печени, 36 килограмм çурă пыл, 1.500 çăмарта, 50 килограмм конфет, 51 литр эрех, 35 килограмм ытла окорок ярса пачĕç.

«Осоавиахим» колхоз тырпул тухăçне çулран çул ӳстерсе пынăшăн 1939 çулта Пĕтĕм Союзри Ялхуçалăх Выставкинче пулса премин 3.500 тенкĕ тăракан мотоциклет илнĕ.

Нимĕç оккупанчĕсене хирĕç хастарлăн кĕрешекен Хĕрлĕ Çарăн паттăр командирне генерал-майор Кирюхин юлташа «Осоавиахим» колхозăн колхозникĕсемпе колхозницисем мотоциклет ярса параççĕ.

И. ЛАСТУХИН.

Пĕтĕм вăя— тăшмана çĕмĕрсе тăкма!

Хĕрлĕ Çар тĕрĕслĕхлĕ вăрçă туса пырать, вăл хăйĕн тăван çĕршывĕн ирĕклĕхĕшĕн тата никама пăхăнманлăхĕшĕн вăрçать. Çак таса тĕллев Хĕрлĕ Çарăн кашни боецĕн кăмăлне çĕклесе ăна паттăрлăх, хăюлăх кăтартма хавхалантарать. Хăйĕн тăван çĕршывĕшĕн, юнлă тăшмана хирĕç пыракан кĕрешӳре Хĕрлĕ Çар хăйне нихçан манми мухтавлăхпа витрĕ.

Этемлĕх историйĕнче пулнă вăрçăсем уйрăм геройсемпе, паттăр çынсемпе тата пуян эпизодсемпе палăрса тăраççĕ. Анчах вĕсем пурте, халăхăн ирĕклĕхĕпе чысĕшĕн кĕрешекен совет боецĕсен героизмĕпе тата паттăрлăхĕпе танлаштарсан, пĕчĕкленсе юлаççĕ. Хĕрлĕ Çар— хăйĕн халăхĕн тăван ывăлĕ пулса тăрать, вăл халăхпа тачă çыхăнса тăрать. Хăйĕн вăйĕпе хăватне Хĕрлĕ Çар халăхран илсе тăрать, совет халăхĕ вара вăйлă та хăватлă. Пирĕн çĕршывра халăхпа çарсене пĕрлĕхлĕ тĕллев, пĕрлĕхлĕ задачăсем пĕтĕçтерсе тăраççĕ.

Хĕвеланăçĕнче çăмăл çĕнтерӳсем тунипе иртĕхсе кайса, Гитлер ССР Союзне хирĕç вăрçă пуçларĕ, вырăссен çĕршывĕ тăрăх хĕвеланăçĕнчи пекех çăмăллăн утса тухма ĕмĕтленчĕ. Вăл пирĕн государствăна «çиçĕм пек хăвăрт» çĕмĕрсе тăкма плансем тунă, пирĕн çĕршыва тытса илсе, пирĕн халăха нимĕçсен кивĕ тата çĕнĕ баронĕсен чурисем туса хума шутланă.

Хăватлă вырăс халăхĕ ертсе пыракан нумай нацийлĕ совет государстви çак кунсенче гранит пек çирĕп тăрать. Кĕрешӳри йывăрлăхсем те, вăхăтлăха пулнă ăнăçсăрлăхсемпе каялла чакни те Хĕрлĕ Çарăн вăйĕпе совет халăхĕн çирĕп кăмăлне хавшатаймарĕç. Пирĕн çĕршыв ытти çĕршывсем хушшинче яланах аслă держава пулнă, халĕ те тата малашне те çавăн пекех пулĕ. Пирĕн халăх хăйĕн çарне хĕрӳллĕн юратать. Пуласлăхшăн, хăйсен ачисен телейĕшĕн Хĕрлĕ Çар боецĕсем фашистсене хирĕç вăя тата пурнăçа шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Эпир хамăр вăй çине шанса тăратпăр. Совет çыннисене çĕнтерме пултаракан вăй тĕнчере çук. Авалхи славянсен сăмахĕсене аса илсе, эпир çапла калатпăр: «Пирĕн вăйсене хăйне пăхăнтарма пултаракан çын тĕнчере çуралнă-и тата вăл хĕвел ăшшипе хĕрĕнсе пурăнать-и? Çавăн пек çын этемлĕх историйĕнче пулман-ха, ун пек çын пулмасть те. Славянсен йăхĕсем, вăл шутрачи хăватлă вырăс халăхĕ те, нихçан та чура пулман тата пулас та çук».

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç тăвакан отечественнăй аслă вăрçă 10 уйăх хушши пырать ĕнтĕ. Вăйлăн хĕçпăшалланнă нимĕç фашизмĕ тискеррĕн тапăннине сирсе ярса, противника малтанхи çапăçусенче хавшатса пырса, Хĕрлĕ Çар контрнаступлени тума тытăнчĕ, халĕ нимĕç çарне аркатмаллах пыра-пыра çапать. Гитлерăн мухтаса пĕтернĕ «никам çĕнтерейми» çарĕ арпашса кайрĕ, халĕ пысăк çухатусем туса хĕвеланăçнелле чакса пырать. «Тăшман поражени тӳсет, анчах ăна çĕмĕрсе тăкман-ха, унтан та ытларах, ăна пĕтерсе тăкман-ха. Тăшман вăйлă-ха. Анăçусем тăвас тесе, вăл юлашки вăйĕсене пухма тăрăшĕ» (Сталин). Малашне нумай йывăрлăхсем пулĕç, анчах темĕнле йывăрлăхсем пулсан та, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ темĕнле йывăр пулсан та, нумай вăхăт хушши тата тимлĕн кĕрешсе, совет халăхĕ Германи фашизмне çĕнтерессе эпир çирĕппĕн шанса тăратпăр. Çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать, пирĕн халăх çакна ĕненсе тăрать. Çав тĕллеве пурнăça кĕртес тесе, пирĕн çĕршыври ĕççыннисем фронта кирлине пурне те туса пыраççĕ. Хĕрлĕ Çара пулăшма хăйсен пĕтĕм вăйне параççĕ.

Сталин юлташ ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме, фронт валли ытларах та ытларах танксем, танксене хирĕç пемелли пăшалсемпе орудисем, самолетсем, тупăсем, минометсем, пулеметсем, винтовкăсем, боеприпассем, тырпул, промышленность валли тĕртавар парса тăма чĕнсе каланине пирĕн çĕршыври кашни патриот кĕрешӳ программи вырăнне хурса йышăнчĕ. Чăваш АСС Республикинчи ĕçсыннисем, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, çĕршывăн материальнăй тата укçа-тенкĕ ресурсĕсене хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçлесе ӳстерсе пыраççĕ. Пирĕн республикăри рабочисем, колхозниксем, интеллигентсем фронта пур енĕпе те пулăшас ĕçе организацилес тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Çĕршер промартельсем çар заказĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕç, пирĕн Хĕрлĕ Çара кирлĕ япаласене туса пачĕç. Предприятисемпе транспортра, стахановецсен — двухсотниксемпе трехсотниксен хисепĕ кашни кунах ӳссе пырать. Рабочисем, инженерно-технически работниксем пирĕн предприятисенче чăн-чăн героизм кăтартаççĕ, нормăсене ирттерсе тултарассишĕн, производство заданийĕсене срокчен пурнăça кĕртессишĕн, производствăна рационализацилессишĕн, çĕнĕ продукцисем туса кăларас ĕçе алла илессишĕн хăйсен вăйне шеллемесĕр кĕрешнин тĕслĕхĕсем пирĕн сахал мар. Канашри вагонсем юсакан заводри çĕршер рабочисем нормăна 200 процент тата ытларах та тултарса ĕçлеççĕ. Слесарь Александр Рассказчиков юлташ уйăхри задание 5 кунта тултарнă, котельщиксен бригадирĕ пенсионер Дохленко юлташ, производствăра 57 çул хушши ĕçлекенскер, çапла каланă: «Паттăр Хĕрлĕ Çар нимĕç оккупанчĕсене пурне те пĕтерсе тăкиччен эпĕ мăлатука аларан кăлармăп», тенĕ. Дохленко юлташ бригади нормăна 200 процент тата ытларах та тултарать. 17 çулти двухсотник Ковалев юлташ нимĕç оккупанчĕсене çĕмĕрсе тăкиччен ĕç нормине 200-шер процент тултарса пыма обязательство илнĕ. Хăйĕн сăмахне Ковалев юлташ çирĕппĕн пурнăça кĕртсе пырать.

Республикăри предприятисенчи рабочисем, инженерно-технически работниксем тата руководительсем, патриотизмăн лайăх тĕслĕхĕсене кăтартса, тăван çĕршыв кунçулĕшĕн хăйсем ответлă пулнине туйса, ĕç фронтĕнче паттăррăн кĕрешеççĕ, продукци кăларассине ӳстерес, тăшмана çĕнтерме фронта мĕн кирлине пурне те туса парас тесе тăрăшаççĕ.

Чăваш республикинчи колхозлă хресченсем фронта кулленех пулăшса тăраççĕ. Вăрçă туса хунă хăшпĕр йывăрлăхсене пăхмасăр, республикăри çĕршер колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕç, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене срокчен пурнăça кĕртрĕç. Чăваш республикинчи колхозсемпе колхозниксем оборона фондне 28.300 пăт тĕштырă, 3.850 пăт аш-какай, 7.590 литр сĕт, 15.000 штука ытла çăмарта, 2.200 килограмм çăм панă. Кунсăр пуçне республикăри колхозниксем ССР оборонин фондне кашни уйăхрах хăйсен ĕçкунĕсене парса тăраççĕ, натурăпа шутласан, çав ĕçкунĕсем пиншер пăт тĕштырă, çĕрулми, пахча-çимĕç тата ытти продуктсем пулса тăраççĕ. Çĕрпӳ районĕнчи «Цивильстрой» колхоз колхозникĕсем пуçарнипе республикăра Хĕрлĕ Çар валли выльăх-чĕрлĕх самăртса хатĕрлес ĕç анлăн сарăлса кайрĕ. Апрелĕн 1-мĕш тĕлне республикăри колхозниксем мăйракаллă шултра выльăхсем 400 пуç ытла, 2.418 сурăх, 1.611 сысна тата 20.000 ытла чăхчĕп самăртма тытăннă.

Совет çыннисемшĕн пирĕн тăван çĕршывран хаклăраххи урăх нимĕн те çук. Халăх хăйĕн çарне яланах хĕрӳллĕн юратса тăнă. Халĕ, мухтавлă воинсем нимĕç захватчикĕсене хирĕç хаяррăн кĕрешнĕ вăхăтра, çак юрату уйрăмănах вăйлă. Хĕрлĕ Çара юратни пирĕн халăхăн патриотизмне çуратса тăрать. Çак патриотизма уççăн кăтартса паракан тĕслĕхсенчен пĕри вăл — оборона фондне туни тата Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухни пулса тăрать. Ĕççыннисем оборона фондне укçатенкĕ, заем облигацийĕсем тата хаклă япаласем хываççĕ. Апрелĕн 5-мĕш тĕлне пирĕн республикăра оборона фондне укçа тата государство заемĕсен облигацийĕсене 15 миллион тенкĕлĕх ытла хывнă.

Комсомол пуçарнипе «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 1.300.000 тенкĕ ытла пухнă. Çак пуçарăва пĕтĕм республика йышăнса илчĕ, вăл ĕçе пĕтĕм ĕççыннисем хутшăнчĕç.

Танксен соединенине тума учительсем, МОПР членĕсем тата промкооперацие членĕсем хушшинче 500.000 тенкĕ ытла укçа пухнă.

Фронта пирĕн ачасем те пулăшаççĕ. Етĕрне хулинчи пионерсем «Пионер Чувашии» танка тума укçа пухас ыйтăва çĕклерĕç. Кĕске вăхăт хушшинчех çак ĕç валли 200.000 тенкĕ ытла пухнă.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсемпе кĕпе-йĕмсем пухса фронта пулăшас ĕç республикăра анлăн сарăлса кайрĕ. Пирĕн республикăри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар валли пĕтĕмпе 65.846 тир, 11.400 штука тир-сăран пухнă, вĕсенчен 6.200 кĕрĕк-пиншак, 900 жилетка, 7.010 алса çĕлесе панă; 38.900 килограмм çăм пухнă, вĕсенчен 16.506 мăшăр çăматă йăвалаттарнă. Ĕççыннисем 700 кĕрĕк-пиншак, 1.100 жилетка, 3.300 мăшăр çăматă, 22.100 мăшăр алшиш, 16.500 мулаххай, 17.600 çăм чăлха, 15.000 алшăлли тата ытти япаласем нумай панă. Çак япаласене пурне те действующи Хĕрлĕ Çара ярса панă.

Чăваш республикинчи ĕççыннисем фронт валли парнесем тăтăшах ярса тăраççĕ. Çапла майпа вĕсем хăйсем Хĕрлĕ Çара юратнине кăтартса параççĕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем, командирĕсемпе политработникĕсем валли çĕнĕ çул ячĕпе фронта 3.955 посылка, 78 тонна ярса панă, Хĕрлĕ Çар кунĕ ячĕпе 2.819 посылка, 51 тонна ярса панă. Хальхи вăхăтра пĕтĕм республикăра генерал-майор Кирюхин чаçĕнчи боецсем валли Майăн пĕрремĕш ячĕпе парнесем пухас ĕç анлăн сарăлса кайрĕ. Çав парнесене ятарласа тунă эшелонпа пирĕн республикăн делегацийĕ çывăх кунсенчех илсе каймалла. Делегатсен шутĕнче промышленность предприятийĕсемпе колхозсенчи чи лайăх стахановецсем тăраççĕ. Делегацине Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ, СССР Верховный Совет депутачĕ З. А. Андреева юлташ ертсе пырать.

Пирĕн республикăри ĕççыннисем, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, хăйсен тăван çĕршывне, Ленин—Сталин партине чĕререн парăнса тăраççĕ. Хĕрлĕ Çарăн ăнăçăвĕсем пире фронта татах та вăйлăнрах пулăшма хушнине, ĕç фронтĕнче вăя шеллемесĕр ĕçлеме хушнине вĕсем пĕтĕмĕшпех ăнланаççĕ. Çавăнпа та кашни патриот хăйĕн вырăнĕнче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет.

Пирĕн республикăри предприятисем, артельсем тата колхозсем хушшинче плана, пуринчен малтан çар заказĕсене, ăнăçлăн тата срокчен тултарассишĕн Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ.

Колхозлă хресченсемшĕн хĕрӳллĕ вăхăт — çурахи вăхăчĕ çывхарса килет. Чăваш республикинчи колхозниксем çĕршыва ытларах тырпул, аш-какай тата промышленность валли чĕртавар парас задачăна ăнăçлăн пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ. Çуракине хатĕрленсе çитнĕ колхозсем çинчен пĕлтерекен хыпарсем кашни кунах килсе тăраççĕ.

Халăх хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне сарса ярса тата колхозниксене пурне те ĕçе явăçтарса, çуракине ăнăçлăн ирттересси — партипе советăн вырăнти организацийĕсен пысăк задачи пулса тăрать.

Эпир фронта пулăшасси кашни кунах вăйланса ӳссе пымалла. Пирĕн хамăрăн пĕтĕм ĕçе çак задачăна пăхăнтармалла. Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсен мĕн кирли пурте пултăр тесе пирĕн тимлĕн кĕрешмелле. Тăшмана хирĕç пыракан кĕрешӳри чи йывăр вăхăтсенче боецсем хăйсемшĕн пĕтĕм халăх тăван амăшĕ пек тăрăшнине туйса тăччăр. Халăх пулăшăвĕ вĕсене çапăçу хирĕнче геройла çапăçма хавхалантарса пытăр.

А. МАТВЕЕВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Апрелӗн 11-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӗвӗн вӗҫҫӗ

* * *

Нимӗҫ салтакӗсен ушкӑнӗ хаяр тупӑ пӑрӑнакан пунктри сурчӗсенчен пӗрине вырнаҫса ларнӑ та унтан пирӗн тӑрса пирӗн пехотӑна малалла каяма чӑрмантарнӑ. Сержант Николаев икӗ боецпа пӗрле ҫуртӑн чердакне хӑпарса кайнӑ, мачча пӑтарса темиҫе граната пӑрахнӑ. 12 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Нимӗҫсен 294-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 614-мӗш полкӑн 11-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ ефрейтор Генрих Постулька ҫапла каласа панӑ: «Мартӑн 24-мӗшӗнче пирӗн 3-мӗш батальон атакӑна кӗрсе кайрӗ. Вырӑссем пире пысӑк ҫухатусем кӳрсе каялла хӑваласа ячӗҫ. Пирсе шӑрахасса хӑратса, обер-лейтенант Климас салтаксене иккӗмӗш хут атакӑна кӗртсе ячӗ. Вӑл алӑра револьвер тытса салтаксене хӑваласа пычӗ. Атака путленсе ларсан, Климас ҫапӑҫу хирӗнчен тарчӗ. Ун хыҫҫӑн салтаксем те тарса пӗтрӗҫ. Часах пире пулӑшма пӗррӗмӗш батальон пырса ҫитрӗ, анчах вӑл яла кӗрсе кайма хӑтланнисем пурте ахалех пулчӗҫ. Пӗррӗмӗш батальон, виҫҫӗмӗш батальон пекех, пысӑк ҫухатусем турӗ».

* * *

Югослави партизанӗсем оккупантсене пӗрмаях пыра-пыра ҫапаҫҫӗ. Март уйӑхӗнче партизансен отрячӗсем Италин пӗр чаҫне пӗтерсе тӑкнӑ тата 12 пулемет, 200 винтовка, 25.000 патрон тата ытти ҫар пурлӑхӗсем тытса илнӗ. Партизансем Загреб—Сплит чугунҫул линине пӗрмаях ҫӗмӗрсе-ҫӗмӗрсе тӑкаҫҫӗ, ҫав ҫул ҫакна пула икӗ уйӑх ытла ӗнтӗ ӗҫлеместь. Войскӑсемпе хӗҫпӑшалсем тиенӗ икӗ поезда ӳпӗнтерсе янӑ. Туртса илнӗ хӗҫпӑшалсемпе тата боеприпассемпе усӑ курса, партизансем фашистла захватчиксене кунран кунах ҫӗмӗрсе пыраҫҫӗ.

Ютҫӗршыв корреспонденчӗсен черетлӗ пресс-конференцийӗнчӗ

Мускава тата Хӗвеланӑҫ фронтне кайса чылай вӑхӑт хушши ҫӳресе килнӗ хыҫҫӑн, апрелӗн 10-мӗшӗнче Куйбышев хулинче ютҫӗршыв корреспонденчӗсен черетлӗ пресс-конференцийӗ пулса иртнӗ. Пресс-конференцире Совет Информаци Бюровӗн начальник заместителӗ С. А. Лозовский юлташ ютҫӗршыв корреспонденчӗсем панӑ чылай ыйтусем ҫине ответленӗ.

Корреспондентсенчен пӗри—Совет Союзӗне Япония пулӑ тытас тӗлӗшпе нумаях пулмасть алӑ пуснӑ конвенци пирки эсир мӗн каласа пама пултаратӑр, тесе ыйтнине хирӗҫ Лозовский юлташ ҫапла ответленӗ:

Пулӑ тытас тӗлӗшпе 1928-ҫулта тунӑ конвенцин срокӗ 1936 ҫулта тухнӑ, ӑна темиҫе ҫул хушши тӑтӑшах малалла ҫӗнетсе пынӑ, кӑҫал вара ҫав конвенцие татах та тепӗр ҫул валли, урӑхла каласан, 1942 ҫулти декабрӗн 31-мӗшчен, малалла тӑснӑ. Конвенци хуҫалӑх тӗлӗшпе тунӑ килӗшӳ пулса тӑрать, ҫав килӗшӳре икӗ енӗн интересӗсем те палӑрса тӑраҫҫӗ тата вӑл Совет Союзӗшӗн те усӑллӑ мӗншӗн тесен, Япони правительстви ҫак тӗлӗшпе калаҫусем пынӑ чухне хӑйӗн ыйтӑвӗсене чылай пӗчӗклетсе чакарнӑ, ун ҫинчен ТАСС кӑҫалхи мартӑн 21-мӗшӗнче панӑ пӗлтерӳре каланӑ.

Тепӗр корреспондент: Анкарари процесс ҫинчен эсир мӗнле те пулин ҫӗнӗ сведенисем хушса пама пултараймастӑр-и тата ҫав процесс политика тӗлӗшпе мӗнле вырӑн йышӑнса тӑнине ӑнлантарса пама пултараймастӑр-и, тесе ыйтнӑ. Ҫакӑн ҫине ответлесе, Лозовский юлташ ҫапла каланӑ:

Нимӗҫсем Турци территорийӗ ҫинче тӑвакан ҫав провокацие совет пичечӗ хак панӑ та ӗнтӗ. Ҫак ӗҫ патне, паллах, рейхстага вут тӗртсе ҫунтаракан специалистсем хӑйсен аллине пырса тӗкнӗ. Ҫав провокаторсем хӑйсен умне Совет Союзӗпе Турци республики хушшинчи ҫыхӑнӑва пӑсас тӗллеве лартнӑ. Пите пысӑк пулин те, Турцире тӗрлӗрен сӑлтавсене пула гестапо аллине парӑннӑ ҫынсем тупӑннӑ. Совет граждӑнӗсене хирӗҫле ҫав ӗҫе, ҫӗрӗк ҫипсемпе ҫӗлесе пӗтӗҫтерпӗскере, паллах, гестапо туса хатӗрленӗ. Ҫав ӗҫ пирӗн ҫӗршыври обществӑллӑ шухӑша тивӗҫлипех тарӑхтарса ячӗ. Совет ҫыннисем Турцире гитлеровецсене ҫавӑн пек провокацисем тума ирӗк памаҫҫӗ пулӗ тесе шутланӑччӗ. Анчах иккӗленмелли ҫук: ҫав провокацин авторӗсене юлашкинчен ҫапах та тӑрӑ шыв ҫине кӑларӗҫ, ун чухне вара ҫав ӗҫе мӗншӗн пуҫарса яни Турцире пуриншӗн те паллӑ пулса тӑрӗ.

Корреспондентсенчен пӗри: Болгарин патши Борис халӗ Гитлер патне кайнине, Болгарин министрсен совечӗн председателӗ г-н Филовӑн выступленине эсир мӗнле хаклатӑр, тесе ыйтнӑ. Лозовский юлташ ҫапла каланӑ:

Германи правительстви, Болгари халӑхӗн шухӑш-кӑмӑлӗсене хирӗҫ пырсах, хӑйӗн валли ҫапса пыман «тупӑ какайне» Болгарирен илес шутпа, Болгари питех те хытӑ хӗсет. Болгари правителӗсем Гитлер умӗнче тарҫӑлла упаленсе питех те шала кӗрсе кайрӗҫ. Германия 1914—18 ҫулсенчи вӑрҫӑра Болгарие вилӗм шӑтӑкне пӗрре туртса кӗрсе кайнине Болгари правителӗсем манаҫҫӗ, вӗсем Гитлера пӑхӑнса ҫав кивӗ йӗрпех пыраҫҫӗ, Болгари валли гитлерла Германия кӗтсе тӑракан шӑпанах хатӗрлеҫҫӗ. Болгари халӑхӗ хӑйӗн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхне тупма пулӑшнӑ вырӑс халӑхӗ ҫине питех те пысӑккӑн хисеплесе тата юратса пӑхать, вырӑс халӑхӗ те хӑй енчен Болгари халӑхне ҫавӑнашӑн хисеплет. Паллах, Болгари халӑхне гитлерла юнлӑ авантюрӑна хӑваласа кӗртме хӑтланакансен шӑпи инкеклӗ кӑна пулӗ.

СССР, Великобритания тата Иран пӗрпӗринпе союзлӑ договор тунӑ хыҫҫӑн Совет Союзӗпе Иран хушшинчи ҫыхӑнусем мӗнле аталанса пыни ҫинчен корреспондентсенчен пӗри панӑ ыйту ҫине ответлесе, Лозовский юлташ ҫапла каланӑ:

Нимӗн иккӗленмелли те ҫук, эпир Иранпа тунӑ союзлӑ договор хӑйне тивӗҫлипех тӳрре кӑларать, ҫав договор ҫине алӑ пуснӑ ҫӗршывсен интересӗсене чӑннипех тивӗҫтерет. Иранӑн лару-тӑрӑвӗ пур тӗлӗшрен те ҫирӗпленчӗ. Совет Союзӗ ҫине туслӑн шанса пӑхас кӑмӑл-туйӑмсем тата союзниксемпе ҫыхӑнса ӗҫленӗ никӗс ҫинче тытӑнса тӑракан хӑрушсӑрлӑхӑн кӑмӑл-туйӑмӗсем Иран халӑхӗ хушшинче ҫирӗпленсех пыраҫҫӗ. Союзниксем Ирана экономикӑллӑ пулӑшу парса пыни хӑйӗн ырӑ енӗсене палӑртма тытӑнать. ССР Союзӗпе Иран хушшинчи культурӑллӑ ҫыхӑнусем ӑнаҫлӑн аталанса пыраҫҫӗ. Иранри лару-тӑру ҫакӑн пек лайӑхланса пыни тата Иран союзлӑ ҫӗршывсемпе тытакан ҫыхӑну ҫирӗпленсе пыни гитлеровецсене тарӑхтарса шартлантарать те ӗнтӗ. Гитлеровецсем чарӑнма пӗлмесӗр чи ухмахла халлап-юмахсем сараҫҫӗ. Вӗсем сӳпӗлтетнӗ тӑрӑх, Англия Ирана Совет Союзӗн аллине «панӑ» пулать, Иран «советланса» пырать имӗш, Хӗрлӗ Ҫара «Ирак ҫинелле» кӗртсе яма тытӑннӑ пулать тата ытти те. Ҫавнашкал суяпа элек кампанийӗ мӗне пӗлтернине Иранри пичет те, совет пичечӗ те тӑрӑ шыв ҫине кӑларчӗҫ ӗнтӗ. Ҫав суяпа элек кампанийӗ хыҫӗнче, паллах гитлеровецсем хӑйсем Иран территорийӗ ҫинче ирсӗр ӗҫсем туса пымалли майсене ҫухатни пирки хаяррӑн тарӑхни кӑна мар пытанса тӑрать, ҫавӑнпа пӗрлех кунта агрессиллӗ ҫӗнӗ плансем, Ҫывӑхри Хӗвелтухӑҫӗнчи чылай ҫӗршывсен интересӗсемпе вӗсен хӑрушсӑрлӑхне хирӗҫ пыракан плансем пытанса тӑраҫҫӗ. Ҫавнашкал условисенче эпир Иранпа тунӑ союзлӑ договор питех те паха вырӑн йышӑнса тӑнине мӗнле йышӑнас мар-ха ӗнтӗ. Союзлӑ договор тӗнчен ҫав пайӗнче мирпе лӑплӑха хӳтӗлемелли ҫирӗп никӗс пулса тӑрать.

„Пионер Чувашии“ танк тума

ҪӖМӖРЛЕ. («Чӑваш Коммуни» корр.). «Пионер Чувашии» танк тума укҫа тенкӗ пухас ӗҫ пысӑк хавхаланупа пулса пырать. Паянхи куна районӗпе 7682 тенкӗ пухнӑ. Вӑл шутран Пуянкай-кинӗри тулличмар вӑтам шкулта вӗренекенсем 240 тенкӗ, Мыслецри тулличмар вӑтам шкулти вӗренекенсем 467 тенкӗ укҫан тата 856 тенкӗлӗх облигацисем панӑ. Тӑвенкри тулличмар вӑтам шкулта вӗренекенсем те 69 тенкӗ укҫан, 240 тенкӗ заем облигацийӗсем пухнӑ.

«Пионер Чувашии» танк тума укҫа пухас ӗҫре пуҫламӑш шкулсем те кая юлмаҫҫӗ. Егоркинӑри пуҫламӑш шкулта вӗренекенсем 132 тенкӗ, Молкачкинӑри пуҫламӑш шкулти ачасем 120 т. пухнӗ. Ҫак ӗҫ районри ытти шкулсенче те анлӑн сарӑлнӑ.

Ҫӗмӗрле хулинчи 2-мӗш №-лӗ шкулта вӗренекенсем 1.300 тенкӗ ытла пухнӑ. Попова, Волкова, Костина тата ытти вӗренекенсем те 10—15-шер тенкӗ панӑ.

Танк тума укҫа пухас ӗҫре ҫитӗннисем те паха тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ. Ҫӗмӗрле хулин учрежденийӗсенчи комсомол организацийӗсем пурӗ 950 тенкӗ пухнӑ.

Х. ЛИСИН.

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефонпа). «Пионер Чувашии» танк тума районри пионерсемпе ҫитӗннӗ ӗҫҫыннисем 13.500 тенкӗ укҫа пухнӑ. Упи вӑтам шкулӗнче вӗренекен ачасемпе учительсем «Пионер Чувашии» танк тума 1.570 тенкӗ укҫа пухрӗҫ. Шкул директорӗ Григорьев юлташ 70 тенкӗ пачӗ. Медикасси пуҫламӑш шкулӗнче вӗренекен ачасем «Пионер Чувашии» танк тума кашниех 10—15-шер тенкӗ параҫҫӗ. Ку шкулӑн заведующийӗ пулса комсомолӑн колхозри организацийӗн секретарӗ Никифоров юлташ ӗҫлет. Вӗренекен ачасене вӑл «Пионер Чувашии» танк тӑвасси ҫинчен лайӑх ӑнлантарса панӑ. Ачасем кӗске вӑхӑтрах 400 тенкӗ укҫа пухса пачӗҫ.

М. АЛЕКСАНДРОВА.

* * *

ЕТӖРНЕ. Ядринори вӑтам шкулта вӗренекенсем Етӗрне хулинчи пионерсем «Пионер Чувашии» танк тума чӗнсе каланине сӳтсе-яврӗҫ. Вӗсем танк тума 750 тенкӗ укҫа, 15 центнер тимӗр-тӑмӑр пухса пачӗҫ.

П. КРАСНОВ.

Совет партизанӗсем фашистла оккупантсене ҫӗмӗреҫҫӗ

СТАМБУЛ, апрелӗн 10-мӗш. (ТАСС). «Ени сабах» хаҫатӑн редакторӗ Джахид Ялчин нимӗҫсем вӑхӑтлӑха йышӑннӑ совет районӗсенче пыракан партизанла кӗрешӳ ҫинчен статья пичетлесе кӑларнӑ. Вӑл ҫырнӑ тӑрӑх, совет патриочӗсем оккупантсене мӗнтери пысӑк ҫухатусем кӳни ҫинчен нимӗҫсем ҫӑвара шыв сыпнӑ пек нимӗн те пӗлтермесӗр тӑни йӑлана кӗнӗ ӗнтӗ. Партизансен кӗрешӗвӗ ҫавтери хӑватлӑн та анлӑн сарӑлса кайни ҫинчен,—тесе ҫырать вӑл,—Венгри регенчӗ Хорти нумаях пулмасть Венгри войскисем патне янӑ телеграмма та лайӑх кӑтартса парать.

«Вырӑс партизанӗсем оккупантсен вӑйӗсене мӗн тери хаяр тапӑнусемпе хӑратса тӑнине ӑнланса илес тесен, — ҫырать малалла Ялчин, — ҫав телеграммӑна кӑна лайӑхрах вуласа тухас пулать. Оккупантсен тылӗнче кунӗн-ҫӗрӗн вӑйлӑ ҫапӑҫусем пулса иртеҫҫӗ тесе йышӑнни вырӑс партизанӗсем оккупантсене пысӑк активлӑхпа тата сулӑмлӑ вӑйпа ҫӗмӗрсе сисӗнтермелле ҫухатусемех кӳнине пӗлтерет. Ҫакӑ вӑл тата вырӑс партизанӗсем питех те хӑрушӑ вӑй пулса тӑнине те пӗлтерет».

Юлашкинчен Ялчин ҫапла ҫырать: «Венгри ҫарӗ патне янӑ хӑйӗн телеграмминче Хорти ҫакна паллӑ тӑвать: Венгри чаҫӗсен хӗҫпӑшалӗпе снаряженийӗ хальхи вӑрҫӑн ыйтӑвӗсене ҫырлахтарма пултараймаҫҫӗ. Ҫапла ӗнтӗ ҫак сӑмахсенчен акӑ мӗн тухса тӑрать: Хӗрлӗ Ҫар кӑна мар, вырӑс партизанӗсем те Венгри ҫарӗнчен нумай лайӑхрах хӗҫпӑшалланнӑ. Ҫакна май акӑ мӗне астуса илни те сиенлех пулмалла мар: ытла нумаях та пулмасть вырӑссене кураймансынсем пурте пӗр каварлӑ пулса—советсен ҫарӗ начар тумтирпе ҫӳрет, унӑн хӗҫпӑшалӗ те нимӗне те тӑмасть, тесе кӑшкӑратчӗҫ».

Германи ҫарӗнчи „ҫын пытаракан командӑсем“

ЛОНДОН, апрелӗн 9-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви ҫапла пӗлтерет: фронтра пысӑк ҫухатусем тӳснине пула, Германи командованийӗ Германи ҫарӗн чаҫӗсенче ятарласа «ҫын пытаракан командӑсем» тунӑ. Ҫав командӑсем кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлеҫҫӗ пулин те, нимӗҫсен мӗншур вилнӗ салтакӗсене шӑтӑк чавса пытарса хӑварма ӗлкӗреймеҫҫӗ. Нумай пунктсенче ҫын виллисем темиҫе кун хушши купи-купипе выртаҫҫӗ. Ҫав командӑсенче 16—17 ҫулти ҫамрӑксем кӑна мар, 60 ҫултан иртнӗ стариксем те нумай. Германи енче фронт ҫывӑхӗнче нумай тӗлте ерекен чирсем сарӑлса кайнӑ. Хӗлле пӗтнӗ нимӗҫ салтакӗсен виллисем халӗ хирсемпе вӑрмансенче пиншерӗн тухаҫҫӗ. Ашӑ ҫанталӑк пуҫлансан нимӗҫ войскисен ҫывӑх тылӗнче питӗ хӑрушӑ эпидеми пуҫланса каясси хӑратса тӑрать.

ГРЕЦИЕ АМАННӐ НИМӖҪСЕМ ПЫРСА ТУЛНӐ

ЛОНДОН, апрелӗн 9-мӗш. (ТАСС). Грецирен пӗлтернӗ тӑрӑх, унта Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтӗнчен аманнӑ нимӗҫсене питӗ нумай илсе пыраҫҫӗ. Афинӑра обществӑллӑ нумай ҫуртсенчен госпитальсем туса хунӑ.

Эльзасра Германие хирӗҫ саботаж тӑваҫҫӗ

НЬЮ-ЙОРК, апрелӗн 9-мӗш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Эльзасра пурӑнакан ҫынсем нумайӑшӗсем нимӗҫсем майлӑ ӗҫлесшӗн мар. Эльзасра Германи валли ӗҫлекен чи пысӑк фабрикӑсемпе заводсенче саботаж сарӑлса пырать. Сӑмахран, сивӗлле прокатланӑ алюмини листисем «тӗлӗнмелле» хуҫӑлаҫҫӗ, вӗсене туса хатӗрленӗ чухне ытлашши хӗсеҫҫӗ-мӗн, пралуксем те ытлашши черченкӗ пулаҫҫӗ, час хуҫӑлаҫҫӗ. «Мюльгаузер дагблат» хаҫатра Германири пӗр промышленникӑн сӑмахне пичетлесе кӑларнӑ. Ҫав промышленник ҫапла каланӑ: «Эпӗ Эльзас халӑхне нумайӑшне ӑнланаймастӑп, вӗсем теме кӗтеҫҫӗ, кампа каяс-ши тесе вӑрахчен иккӗленсе тӑраҫҫӗ».

НИМӖҪСЕН ФИНЛЯНДИРИ ВОЙСКИСЕН КОМАНДУЮЩИНЕ ВЫРӐНТАН КӐЛАРНИ

ЖЕНЕВА, апрелӗн 9-мӗш. (ТАСС). Тӳрӗс пӗлекен ҫынсем каланӑ тӑрӑх, Гитлер фон Фалькенхорст генерала нимӗҫсен Финляндири войскисен командующийӗ вырӑнӗнчен кӑларнӑ, ҫав вырӑна Дитль генерала лартнӑ. Фон Фалькенхорст генерала ҫакӑн пирки вырӑнтан кӑларнӑ тесе шухӑшлаҫҫӗ: вӑл хӑй ячӗпе калаҫнӑ чухне ҫапла каланӑ: Финляндин ҫын резервӗсем те, материальнӑй ресурсӗсем те ҫук, Финлянди малалла кӗрешме пултарасси шанчӑксӑр, тенӗ. Фалькенхорст тата финсен офицерӗсенчен чылайӑшӗсем, Германия малалла та вӑрҫма ультиматумла хушнипе хӑйсем тарӑхнине час-часах уҫҫӑнах палӑртакансккерсем, ҫавӑн пекех шухӑшлаҫҫӗ, тесе кӑтартса панӑ.

НИМӖҪСЕН „ВИЛӖМ ФАБРИКИСЕМ“

ЛОНДОН, апрелӗн 10-мӗш. (ТАСС). «Нью-Йорк пост» хаҫатра Берн хулинчен илнӗ хыпарсене пичетлесе кӑларнӑ. Ҫав хыпарсем тӑрӑх Англин информаци министерстви ҫапла пӗлтерет: нимӗҫсем хӑйсен йывӑр аманнӑ салтакӗсене вӗлерсех пыраҫҫӗ. Вӗсен ҫавӑн пек йывӑр аманнӑ салтаксене вӗлерме Лион, Макон, Лимож тата Марсель хулисенче ятарласа тунӑ «вилӗм фабрикисем» пур. Нумаях пулмасть Лиона йывӑр аманнӑ салтаксене темиҫе поезд илсе пынӑ. Ҫавӑн пек йывӑр аманнӑ салтаксене вӗсем питӗрсе илсе пломба тунӑ вагонсемпе ҫӗрле илсе пыраҫҫӗ. Ҫутӑсене сӳнтерсе лартнӑ станцӑра ҫав вагонсене гестапора уйрӑм учетра тӑракан служительсем йышӑнса илеҫҫӗ. Станци районӗнче ҫав вӑхӑтра пӗтӗм движение чарса лартаҫҫӗ, вара ун чухне унта мӗн пурӗ те санитарнӑй машинӑсем кӑна ҫӳреме пултараҫҫӗ.

Гитлерла хаҫатсем салхуллӑн ҫыраҫҫӗ

СТОКГОЛЬМ, апрелӗн 10-мӗш. (ТАСС). Нимӗҫсен фашистла хаҫачӗсем кашни кунах гитлерла Германия тӳсекен, ӳссе пыракан йывӑрлӑхсем ҫинчен нӑйкӑшса ҫыраҫҫӗ. «Берлинер берзенцейтунг» хаҫат ҫапла ҫырать: «Йывӑр хӗл тылра кӑна мар, фронтра та палӑрчӗ. Фронт нимӗҫ салтакӗсем хӑҫан та пулин тӳссе иртернӗ пысӑкран та пысӑк йывӑрлӑхсене тӳссе ирттерчӗ. Анчах та ҫак хӗл вӑл нимӗҫ халӑхне нимӗн те памарӗ».

Ҫав хаҫат тата малалла хуйӑха ӳксе ҫакна палӑртать: «ҫынсем пурнӑҫпа вилӗм хушшинче тӑни вӗсене уяври пек савӑнӑҫлӑн шухӑшлаттармасть», тет. «Берлинер берзенцейтунг» хаҫат юлашкинчен ҫапла калать: «Нимӗҫ салтакӗсем этем тӳссе ирттермен хуйхӑпа асапа пӗлсе ҫитрӗҫ. Вӑрҫӑ вӗсенчен малашне те пысӑкран пысӑк чӑтӑмлӑх ыйтӗ. Анчах халь пуласлӑх ҫинчен малтан каласа хума никам та хӑяс ҫук» тет.

Нимӗҫсен фашистла тепӗр хаҫачӗ «Локальанцейгер» ҫавӑн пекех хуйхӑллӑ ҫырать. «1942 ҫулти вӑрҫӑллӑ мункун» ятлӑ статьинче вӑл — «вӑрҫӑ вӑл концерт мар», «вӑрҫӑ хальхинчен ҫӑмӑлтарах пулас ҫук», «пурӑнса ирттерме пӳрнинчен пӑрӑнса каяйман» тесе пусӑрӑнчӑклӑн ҫырать.

ФИНСЕН ХАҪАЧӖСЕМ ИРӖКСӖРЕХ ЙЫШӐННИ

СТОКГОЛЬМ, апрелӗн 10-мӗш. (ТАСС). Финсен хаҫачӗсем Финляндири лару-тӑру ҫивӗчленни ҫинчен, вӑрҫа пула тарӑхни ӳссе пыни ҫинчен ытларах ҫыра пуҫларӗҫ. «Суомен сосиалидемокраатти» хаҫатӑн ирӗксӗрех ҫакна йышӑнма тивнӗ: «мире кӗтесси» финн халӑхӗ хушшинче сарӑлсах пырать, мӗншӗн тесен Финляндин ҫӗнтерӳ ҫине шанмалли ҫук, мӗншӗн тесен «финсене вӗсене алли-урипех ҫыхса лартнӑ». «Кам енче правапа тӗрӗслӗх, ҫавсем ҫӗнтерӗҫ», тесе йышӑнать хаҫат; кунта ӗнтӗ вӑл Совет Союзӗпе Великобритани тата США ҫинчен калать. «Суомен сосиалидемокраатти» хаҫат ҫав ҫӗршывсене ятранах каламасть, анчах та «Кансаллис сосиалисти» ятлӑ финла-нимӗҫле хаҫат ҫав хаҫат ҫине сиксе ӳкнине шута илсен, ҫапла шухӑшлани тӗрӗсси курӑнсах тӑрать. «Кансаллис сосиалисти» ҫав хаҫат пирки ҫиленсе ҫапла ҫуйӑхать: «Финн салтакӗсем фронтра «Суомен сосиалидемокраатти» хаҫатӑн статьине вуласассӑн мӗн пулса тӑрӗ. Ун ҫинчен шухӑшлама та хӑрушӑ. Ҫав хаҫат ҫырнисем шанманлӑх, ӗненменлӗх, иккӗленӳлӗх акма хӑтланни пулса тӑраҫҫӗ», тет.

Финсен фашистла хаҫачӗ «Иллка» хуйхӑрса ҫакна палӑртать: Финляндин шалти фрончӗ ытларах та ытларах арканса пырать, «Финн салтакӗсемпе граждӑнла халӑхӑн шухӑш-кӑмӑлӗсем хавшанӑ». Хаҫат тата фронта яракан хӑшпӗр ҫырусем финн салтакӗсен шухӑш-кӑмӑлӗсене тӳрлетейми пысӑк сиен кӳреҫҫӗ тесе ҫырать, халӑха «финн салтакӗсем патне яракан ҫырусенче ытла нумай япала ҫинчен ан ҫырӑр, пирӗн йывӑрлӑхсем ҫинчен сахалтарах асӑнӑр» тесе йӑлӑнать.

ИТАЛИ КРЕЙСЕРНЕ ТОРПЕДА ЯРСА ПУТАРНИ

ЛОНДОН, апрелӗн 9-мӗш. (ТАСС). Англин тинӗс министерстви кӑларнӑ коммюникере ҫапла каланӑ: Англин подводнӑй лодки Вӑтаҫӗр тинӗсӗн варринче Италин 10.000 тонна водоизмещениллӗ крейсерне торпеда ярса путарнӑ, вӑл крейсер 8 дюймлӑ орудисемпе хӗҫпӑшалланнӑ пулнӗ.

АНГЛИ САМОЛЕЧӖСЕМ ГАМБУРГ ҪИНЕ ПЫРСА ТАПӐННИ

ЛОНДОН, апрелӗн 9-мӗш. (ТАСС). Англин авиаци министерствин коммюникинче ҫапла каланӑ: апрелӗн 9-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле Англин чылай йышлӑ бомбардировщикӗсем, ҫанталӑк япӑх тӑнине пӑхмасӑрах, Германин ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ пайӗ ҫине вӗҫсе пынӑ. Тапӑнмалли объектсенчен пӗри Гамбург пулнӑ.

Апрелӗн 9-мӗшӗнче Германин самолечӗсем Англин кӑнтӑр ҫыранӗнчи пӗр хула ҫине вӗҫсе пырса бомбӑсем пӑрахнӑ, бомбӑсем вырӑнти больницӑна пӑртак сиенленӗ.

АНГЛИН КРЕЙСЕРӖСЕНЕ ПУТАРНИ

ЛОНДОН, апрелӗн 9-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви каланӑ тӑрӑх, Англин тинӗс министерстви ҫапла пӗлтернӗ: «Дорсетшайр» тата «Корнуэлл» крейсерсене Инди океанӗнче Япони авиацийӗ тапӑнса путарнӑ; ҫав крейсерсен командисенчен пин те ҫӗр ҫынна ҫӑлнӑ, вӑл шутра икӗ крейсерӑн командирӗ те ҫӑлӑннӑ.

ЕГИПЕТӐН ПРЕМЬЕР-МИНИСТРӖ ПУЛНӐСКЕРЕ АРЕСТЛЕНИ

ЛОНДОН, апрелӗн 9-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви Каиртан пӗлтернӗ тӑрӑх, унччен премьер-министр пулнӑ Али Махер-Пашана арестленӗ. Египет министрӗсен кабинечӗ ятарласа пичетлесе кӑларнӑ коммюникере кӑтартса панӑ тӑрӑх, ҫӗршывӑн хӑрушсӑрлӑхне хӳтӗлесе хӑварас шутпа хальхи премьер-министр Нахас-Паша, хӑй ҫар губернаторӗ пулса тӑнӑ май, унччен премьер-министр пулнӑ Али-Махер-Пашана арестлемелле тунӑ.

Гитлеровецсем французсен ученӑйне тискеррӗн асаплантарса вӗлернӗ

ЛОНДОН, апрелӗн 10-мӗш. (ТАСС). «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаҫатӑн Парижри корреспонденчӗ пулса ӗҫленӗ ҫын ҫапла ҫырать: французсен паллӑ ученӑйне Фернанд Хольвека гестапӑра асаплантарнӑ, унтан вара вӗлернӗ. Нимӗҫсем унран чи хӑвӑрт перекен пулемета, пусарнӑ сывлӑш вӗйӗпе ӗҫлекенскере, мӗнле туни ҫинчен ыйтса пӗлесшӗн пулнӑ. Хольвек пӗр сӑмах та чӗнмен.

Ӑна 1941 ҫулти декабрӗн вӗҫӗнче арестленӗ пулнӑ. 10 кун иртсен, унӑн арӑмне вара морга упӑшкин виллине палласа илме чӗннӗ. Хольвек арӑмне упӑшкин аллисемпе урисене пӑхма ирӗк паман, анчах та арӑмӗ упӑшкин аллисемпе урисене пӗҫертсе янине пӗлнӗ.

Хольвек 52 ҫулта пулнӑ. Вӑл телевидение пуҫарса яракансенчен пӗри.

ВӐТАҪӖР ТИНӖҪ БАССЕЙНӖНЧИ ВӐРҪӐ ӖҪӖСЕМ

Юлашки эрнере Ливи фронтӗнче патрульсен кӗрешӗвӗсем тата разведка тӑвакан пӗчӗк ушкӑнсен тытӑҫӑвӗсем кӑна пулса иртнӗ. Анчах та Англин юлашки сводкисем Ливи фрончӗн малти участокӗсенче Германипе Италин войскисем ытларах та ытларах хатӗрланма тытӑннине палӑртаҫҫӗ. Нимӗҫсем кунта хӑйсен вӑйӗсене пухаҫҫӗ. Ҫурҫӗр Африкӑна ҫаплах ҫар пурлӑхӗсем ӑсатса тӑраҫҫӗ. Юлашки хыпарсем тӑрӑх, нимӗҫсем Ливие хӗҫпӑшал ӑсатнӑ ҫӗрте французсен пароходӗсемпе усӑ кураҫҫӗ.

Англин авиацийӗ Бенгази порчӗ ҫине, тӑшманӑн Ливири аэродромӗсем ҫине тӑтӑшах вӗҫсе пырса тапӑнать, юлашки кунсенче вӑл нимӗҫсемпе итальянецсен Тмими, Дерны патӗнчи тата Ливи фрончӗн ытти участокӗсенчи малти позицийӗсем ҫине темиҫе хутчен те бомбӑсем пыра-пыра пӑрахнӑ.

Тӗнӗл держависен авиацийӗ пӗр эрне хушши тӑтӑшах Мальта ҫине вӗҫе-вӗҫе пырса вӑйлӑн тапӑннӑ; утрав тӑлӗнче сывлӑшра вӑйлӑ ҫапӑҫусем пулса иртнӗ. Мальта ҫине тапӑнакан самолетсен шучӗ 500 ҫитет, вӗсенчен нумайӑшӗсем нимӗҫсен машинисем. Апрелӗн 7-мӗшӗнче тӑшман Мальтӑна калама ҫук вӑйлӑн атакӑланӑ, ун пек вӑйлӑ атакӑна юлашки ҫул Мальта урӑх курман та. Ҫав атакӑра 300 ҫити бомбардировщиксем, 50 ҫити истребительсем пулнӑ. Бомбардировщиксем нумайӑшӗсем тата 3-шер хут вӗҫсе пынӑ пулас. Хӑшпӗр кунне ҫакӑ та пулнӑ: пӗр вӑхӑтрах утрав тӗлӗнче тӑшманӑн 180—200 ҫити самолечӗсем вӗҫсе ҫӳренӗ. Мальтӑри тӗрлӗ объектсем ҫине зажигательнӑй тата фугаснӑй бомбӑсем пӑрахнӑ, анчах ятарласа организациленӗ командӑсем пушарсене ҫийӗнчех сӳнтерсе пынӑ.

Мальта тӗлӗнче пыракан сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен авиацийӗ пысӑк ҫухатусем тӳсет. Март уйӑхӗнче Англин истребителӗсем тата зенитнӑй артиллери фашистсен 59 самолетне персе антарнӑ, 100 машинине сиенленӗ. Юлашки эрнере, малтан палӑртнӑ тӑрӑх, Вӑтаҫӗр тинӗс бассейнӗнче тӑшмансен машинисене пурӗ 30 ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

Вӑтаҫӗр тинӗсре ҫаплах-та Англин подводнӑй лодкисем ҫӳреҫҫӗ. Вӗсенчен пӗри апрелӗн 8-мӗшӗнче Италин 10.000 тонна водоизмещениллӗ крейсерӗ ҫине торпеда янӑ. Крейсер 8 минута иртнӗ-иртменех путнӑ. (ТАСС).

ГОСУДАРСТВӐНА ТЫРӐ СУТАҪҪӖ

ҪӖМӖРЛЕ. («Чӑваш Коммуни» корр.). Районри колхозсемпе колхозниксем государствӑна тырӑ сутас ӗҫе сарсах пыраҫҫӗ. Мӑн Улхашри «Красноармеец» колхоз ку таранччен государствӑна 14.640 килограмм, Хутарти Ленин ячӗпе тӑракан колхоз — 12.950 килограмм, Егоркинӑри «Большевик» колхоз 12.160 килограмм сутрӗҫ.

Ҫак хисеплӗ ӗҫе колхозниксем те активлӑн хутшӑннӑ. Сӑмахран, «Красноармеец» колхоз членӗсем 4640 килограмм, «Большевик» колхоз членӗсем 2160 килограмм, Ленин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем 2950 килограмм сутнӑ та ӗнтӗ.

Паянхи куна районӗпе потребкооперации урлӑ государствӑна 103 тонна ытла тырӑ сутнӑ.

Ҫӑмарта пама тытӑнчӗҫ

СЕНТЕРВӐРРИ. Фашистла захватчиксене хирӗҫ паттӑррӑн ҫапӑҫакан тӑван Хӗрлӗ Ҫара районри колхозсем государство умӗнчи хӑйсен обязательствисене вӑхӑтра татнипе пулӑшаҫҫӗ. Чукассинчи Молотов ячӗпе тӑракан колхоз ҫӑмарта памалли обязательствӑна пурнӑҫлама тытӑнчӗ. Малтанхи хут 60 ҫӑмарта пачӗ. Ҫавӑн пекех Ольтикассинчи «1-ое Мая», Пӗчӗк Маклашкинӑри «Красная Армия» колхозсем 45-50-шар ҫӑмарта пачӗҫ. Сӗт памалли обязательствӑн пӗррӗмӗш кварталти планне те ку колхозсем ӑнаҫлӑн туларнӑ.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

Тихасене шефа илчӗҫ

КУКЕҪ. Иккасси вӑтам шкулӗнче вӗренекенсем хӑйсен колхозӗсенчи тихасене шефа илчӗҫ. Ф. Никоноров, Н. Федотов, Н. Лазарев, Н. Емельянов, Г. Спиридонов пионерсем «Хӗрлӗ Ялав» колхозӑн тихисене апат параҫҫӗ, шӑвараҫҫӗ, щеткӑсемпе тасатаҫҫӗ. Тихасене пӑхма вӗсене Е. Тимкова конюх вӗрентсе пырать.

Н. МЫШКИН.

Совет Союзӗ тӑрӑх

▲ Коунрадски рудникри горняксем (Казахстан) Май уявӗн ячӗпе питех те вӑйлӑ эскаватор туса пама йышӑннӑ.

▲ Кизил ҫӗркӑмрӑк бассейнӗнче кӑҫал ҫӗнӗрен 23 шахта уҫаҫҫӗ. Кунта пуринчен ытларах пӗчӗк шахтӑсем тӑваҫҫӗ.

▲ Кӑҫал Дон ҫинчи Ростоври Брынзотрест завочӗсем 550 тонна брынза параҫҫӗ, вӑл пӗлтӗрхинчен пӗрре ҫурӑ ытларах пулать.

▲ Халиччен йӗвен е хӑмӑт тӑхӑнса курмасӑр Чита облаҫӗн ҫеҫенхирӗсенче ут кӗтӗвӗнче ҫӳренӗ темиҫе пин лашана колхозниксем Сретенски, Нерчински тата ытти районри колхозсем валли хӑваласа килнӗ. Аста конюхсем вӗсене кӳлсе ҫӳреме вӗрентеҫҫӗ, уйхирте ӗҫлеме хӑнӑхтараҫҫӗ. Ҫав лашасен пӗр пайне колхозсем ытти облаҫсене сутаҫҫӗ.

▲ Совет архитекторӗсен союзӗ вырӑс зодчествине хисеплесе икӗ выставка уҫма хатӗрленет.

Апрель уйӑхӗн варринче Мускавра архитекторсен ҫуртӗнче «Вырӑс архитектурин паха памятникӗсем» ятлӑ выставка уҫӑлать. Иккӗмӗш выставка вырӑс зодчествин фашистла варварсем пӑсса пӗтернӗ произведенийӗсемпе паллаштарать. Выставкӑна пухнӑ экспонатсем вырӑс архитектурин оккупантсем ҫӗмӗрсе пӗтернӗ историллӗ памятникӗсене кӑтартаҫҫӗ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ПРОПАЛА ЛОШАДЬ

в гор. Чебоксарах, гнедой масти, на лбу звезда, роста 127 см, 1934 года рождения.

Знающих просим сообщить по адресу: Чувашская АССР, Красноармейский район, Чадукасинский сельсовет, правлению колхоза „Унга“.

ЗАВОДУ ТРЕБУЮТСЯ

ИНЖЕНЕРЫ И ТЕХНИКИ, КОНСТРУКТОРЫ ПО ХОЛОДНОЙ ОБРАБОТКЕ МЕТАЛЛА, ЭКОНОМИСТЫ-ПЛАНОВИКИ, НОРМИРОВЩИКИ, СТЕКЛОГРАФИСТ, ИНЖЕНЕР-ЭЛЕКТРИК-МОНТАЖНИК, БУХГАЛТЕРА, СЧЕТНЫЕ, СНАБЖЕНЧЕСКИЕ И СКЛАДСКИЕ РАБОТНИКИ;

РАБОЧИЕ СЛЕДУЮЩИХ СПЕЦИАЛЬНОСТЕЙ:

токаря, слесаря, жестянники, модельщики, прессовщики, штамповщицы, зачистчицы, намотчицы, каменщики, печник, кочегары, фрезеровщики, сверловщики, литейщики, сварщики, гальваники, слаботочники, радист, плотники, шорники, дворники, истопники, строгальщики, шлифовщики-заточники, шоферы 1 и 2 класса, электро-слесарь по авто, наборщик типографии, электромонтеры, ящечники-упаковщики, столяры, возчики, уборщицы, подсобные рабочие;

ПОЖАРНЫЕ РАБОТНИКИ;

ВАХТЕРЫ-ОХРАННИКИ (мужчины и женщины). Зарплата до 300 руб.

Грузчикам и возчикам предоставляются общежития.

ПРИНИМАЮТСЯ ПЕРЕКВАЛИФИКАНТЫ (взрослые ученики от 16 лет).

За время обучения от 1 до 3-х месяцев получают от 150 руб.

За справками обращаться от 8 до 14 часов по адресу: ул. Ленинградская, 38, отдел кадров.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн—4—26, пропагандӑпа парти пурнӑҫ пайӗн — 5—31, ялхуҫалӑх пайӗн — 3—99, «Ленин ҫулӗпе» журналӑн тата комсомол пурнӑҫ пайӗн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 441

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6, 58 64 ...